Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 22 ЫТЛАРИКУН 66 (4879)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23.

Агитаци ĕçне вăйлатмала

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйламалли суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче пирĕн массă хушшинчи большевикла агитацин пĕтĕм вăйхăвачĕ уççăн курăнчĕ.

Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче пур çĕрте те партири тата партире тăман талантлă агитаторсен çĕнĕ кадрĕсем палăрчĕç. Суйлав вăхăтĕнче Чăваш республикинче коммуниссем тата партире тăманнисем—агитаторсем пулса 10.000 çын ытла, доверенăйсем пулса 1.085 çын, участăксенчи тата округсенчи суйлав комиççисен членĕсем пулса 9.000 çын ытла ĕçленĕ. Çак çынсем—рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин чи лайăх представителĕсем. Вĕсем агитаци ĕçне чи ĕнентерӳлĕ фактсемпе туса пынă.

Суйлав хыççăн парторганизацисен задачи агитаторсен çак кадрĕсене çухатмасăр сыхласа усрасси, агитаци ĕçĕнчи чи лайăх формăсемпе методсене çирĕплетсе хурасси пулнă. Анчах, шел те, çавна туман, массăлă-агитацилĕ ĕç кусĕретех йăвашланчĕ. Хăшпĕр парторганизацисен руководителĕсем политикăлă агитаци ĕçне кампани вырăнне хураççĕ пулас. Вĕсем çак ĕçе куллен-кун, йалан ах туса пымалли ĕç вырăнне шутламаççĕ.

Йулашки вăхăтра тин, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене пичетлесе кăларнă хыççăн, парти организацисенче массăлă политикăлă агитаци ĕçĕ самайах чĕрĕлме пуçларĕ, анчах вăл та питĕ çителĕксĕр ха, ытла пит вăрахăн сарăлса пырать.

Райкомсем, агитаторсемпе пĕрле, суйлав кампанийĕ вăхăтĕнчи агитаци ĕçĕсен итогĕсене турĕç. Пур районсенче те агитаторсен вунă кунлăх курсĕсене ирттернĕ, çав курссенчен 1.500 çынна йахăн вĕрентсе кăларнă. Кулленхи политикă ыйтăвĕсене вĕрентекен кружоксем каллех ĕçлеме пуçларĕç. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕрентекен кружоксем ĕçе тытăнчĕç. Вуншар килсем çумне çирĕплетнĕ агитаторсем ĕçлеме тапратаççĕ. Анчах ку ĕçре пирвайхи утăмсене çеç тунă-ха. Агитаци ĕçĕн анлăхĕ те тата тарăнăшĕ те çителĕклĕ тесе йышăнма нимепле те май çук.

Халĕхи вăхăтра тĕп ĕç агитаторсене хăвартрах уйăрса çитересси, вĕсене вĕрентсе пырасси, вĕсен политикăла-идейăлă пĕлӳне тата ĕç квалификацине хăпартас тĕлĕшпе куллен-кун ĕçлесе пырасси пулать.

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухнехи организацилĕ системă çаплах пулмала. Халĕхи вăхăтра суйлав участкисем çук пулин те, агитаторсен участăксенчи организаторĕсем пулмалах (вĕсене кустри организаторсем тесе йат пама йе мĕнле те пулин урăхла калама пулать,—уншăн ĕç улшăнмасть). Тата кашни участăрах 5—7 çын агитаторсем тата хаçат-журналсем вуласа паракансемпе калаçу ирттерекенсем пулмала, вĕсен пуринчен ытла хайсене çирĕплетнĕ килсенче, хватерсенче, общежитисенче ĕçлемелĕ.

Участăксенчи агитаторсен организаторĕсене вăл-ли райкомсем çумĕнче семинарсем тумала (семинара райкомăн пĕрремĕш секретарĕ йертсе пымала), çавăн пекех тата участăксенчи агитаторсем валли—темиçе участăри агитаторсене валли пĕрле—семинарсем тумала,—ку семинарсене районри парти активĕнчи квалификацилĕ йулташсем йертсе пымала. Хаçат-журнал вуласа паракансемпе калаçу ирттерекенсен семинарĕсене участăксенчи агитаторсем йертсе пыма пултараççĕ.

Парти райкомĕсен задачи агитаторсен çакăн пек пысăк çарĕн ĕçĕсене план тăрăх организацилесси, агитаторсен ĕçне куллен кун тĕрĕслесе тăрасси, вĕсене вăхăтра пулăшу парасси пулать. Парткабинетсен те агитаторсене йалан ах пулăшса пымала.

Çак пĕтĕм ĕçре агитаци ĕçĕн пахалăхĕ, унăн политикăлă çивĕчлĕхĕ, большевикла идейăлăхĕ тата тăшмансене хирĕç вирлĕ кĕрешне пырасси тĕп вырăнта пулмала.

Халĕхи вăхăтра политикăла агитаци тунă чухне пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене, совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блока“ суд тунă процес материалĕсене ăнлантарса парасси, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕрентесси, çуракине лайăх хатĕрленсе çитме, халăх хуçалăх планне ăнăçлăн тултарма промышленăçра тата йалхуçалăхĕнче стахановла йухăма массăлăн сарса йарасси, уйрăмăн илсен вăрман хатĕрлев планне тултарасси, чукунçул строителствинчи ĕçсене ăнăçлăн туса пырасси, государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра тултарасси тĕп вырăнта пулмала.

Политикăлă кун, кулленхи политикă ыйтăвĕсене вĕренмелли кружок, хаçатсем вуласа ăнлантарса парасси, тĕрлĕрен ыйтусем тăрăх калаçусем ирттересси т. ыт. те,—массăлă ĕçре чи лайăх формăсем пулса тăраççĕ. Ку ĕçре пĕртен-пĕр формăпа çеç усă курма хушни пулма пултараймасть, шаблон çак ĕçре сийен çеç кӳрет.

Агитацилĕ ĕçе вăйлатса йарасси парти организацинчен килет. Кашни коммунисăн куллен-кунах агитацилĕ ĕçе туса памала, агитацилĕ ĕçе тума райкомран йе хула комитетĕнчен путевкă парасса кĕтсе тăмала мар. Çак ыйтава йертерне районĕнчи Польанкăри коммуниссем пит тĕрĕс ăнланаççĕ. Унта Чистяков, Горбунов, Йухтанов йулташсем куллен-кунах колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитацилĕ ĕçе туса пыраççĕ, хаçатсем вуласа ăнлантараççĕ, калаçусем туса ирттереççĕ.

Массăлă-политикăлă ĕçе анлăн сарса, Чăваш республикинчи ĕççыннисене социалисăм строителствинчи задачăсене ăнăçлăн пурнăça кĕртме, çĕршывăн оборонине тĕреклетме, халăхăн тăшманĕсене—бухаринцăсемпе троцкиссене, буржуалă националиссене т. ыт. те тĕпĕ-тымарĕпех пĕтерсе хума хавхалантарар.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Ленинпа И. В. Сталин Краковăра.
Староносов художник гравйурĕ. (ССРС Революци музейĕ) (Сойузфото).

А. М. Горький çурални 70 çул тултарас умĕн

ЛЕНИНГРАД. (Хамăр корр.). Мартăн 28-мĕшĕнче вырăссен аслă писателĕ Алексей Максимович Горький çурални 70 çул тултарать. Ку куна Ленинград хули тивĕçлĕн кĕтсе илме хатĕрленет.

Ленинграда екскурçине килекен çынсем тӳрех Горький пурăннă вырăнсене кăтартма ыйтаççĕ. Восстани урамĕнче 20-мĕш номерлĕ çуртра Горький „Знания“ йатлă журнал кăларнă, ку çуртрах вăл 1905 çулта Ленинпа тĕлпулнă. Горький йачĕпе тăракан проспектра (ĕлĕк Кронверский проспект пулнă) 13-мĕш номерлĕ çуртра Алексей Максимович вăрçă вăхăтĕнче тата революци пуçланнă вăхăтра пурăннă. Çак çуртсене кашни екскурсант курма пырать.

Кунсăр пуçне екскурсантсем Петропавловский крепăçре Алексей Максимович 1905 çулта ларнă камерăна пысăк интереспа пăхаççĕ, ăна кунта патша йыттисем революцилĕ йухăмра хутшăнса кĕрешнĕшĕн хупнă пулнă, ку камерăра пĕччен хупăнса ларнă вăхăтра вăл „Дети Солнца“ пйесă çырнă.

Йулашки кунсенче пур библиотекăсенче те Горький произведенисене нумайрах илме пуçларĕç.

Аслăлăхсен академин литературă институтĕнче йатарласа пĕр бригадă Максим Горький творчествине сăнаса вĕренет.

Профессор Балухатый пĕлтернĕ тăрăх, „Материалы и исследования“ йатлă кĕнекен 3-мĕш томне кăлараççĕ. Тата „Справочник по Горькому“ тухать. Писател Груздев „Горький и его время“ йатлă пысăк кĕнеке пичете йама хатĕрлет. Ленинградра тухакан литературă журналĕсем — „Звезда“, „Литературный современник“, „Резец“ Горький çурални 70 çул çитнине палăртса йатарласа номĕрсем кăлараççĕ.

Лекторисенче, культурă çуртĕсенче, Хĕрлĕ Çарăн Киров йачĕпе тăракан çуртĕнче, фабрикăсемпе заводсенче Горький творчестви çинчен докладсем пулаççĕ. Йубилей кунĕнче аслăлăхсен академин конференцзалĕнче литературă институчĕпе государствă университечĕн чаплă пухувĕ пулать, унта Горький пурнăçĕ çинчен, унăн творчестви çинчен докладсем пулаççĕ.

А. Михайлов Силурай.
Гр. Расадин.

* * *

ЛЕНИНГРАД, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Ленинград обществен нăçĕ аслă пролетарилĕ писател А. М. Горький çурални мартăн 28-мĕшĕнче 70 çул тултарнине тивĕçлипе палăртса ирттерме хатĕрленет.

Рабочисен клубĕсенче, лекторисенче, культурă çурчĕсенче, библиотекăсенче, парти активĕн çурчĕсенче вечĕрсем туса ирттереççĕ тата „сылтăмла-троцкисла блокри“ тискер бандитсен аллинче вăхатсăр вилнĕ халăхăн чи йуратнă писателĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен лекцисем вулаççĕ.

Аслă писател йачĕпе тăракан Кировский районри культурă çурчĕ А. М. Горький çурални 70 çул тултарнине уйавласа ирттерме вайлăн хатĕрленет. Ку çуртра Горький йачĕпе пысăк выставкă организацилеççĕ.

Кировскри культурă çуртĕнчи художествăлă кружоксем „Горький искусствăра“ йатлă выставкă тума хатĕрленеççĕ. Çак выставкăра хайсем тĕллĕн вĕреннĕ скульпторсен коллективĕ хатĕрленĕ А. М. Горький барельефĕ тĕп вырăн йышăнать.

Казахстанри халăх йурăçин йубилейĕ

Джамбул литературă ĕçĕнче ĕçлеме пуçлани 75 çул тултарас умĕн

Казахстан столици Алма-Ата республикăн паллă йурăçи, орденоносец Джамбул литературă ĕçĕнче ĕçлеме пуçлани 75 çул тултарнине уйавлама хатĕрленет

Республикă хулисемпе промышленнăçлă пысăк центрсенче йубильарăн пултарулăх çулĕ тата общественăлă ĕçĕ çинчен докладсем пулаççĕ. Халăх йурăçисем Джамбул çинчен йурăсем хатĕрлеççĕ. Халăх йурăçи-орденоносец Джамбул йачĕпе кĕске кинофильм ӳке еççĕ.

Джамбул Совет Сойузĕн пур кĕтесĕсенчен те çырусем нумай илет.

Тӳмен хулинчен Назаров лейтенат Джамбул патне çапла çырать: „Ене, Есĕр чухăн пулнине пĕлтĕм, анчах çапах та хăвăн талантна байсемпе муллăсене (кулаксемпе пупсене) сутман. Есĕр—хăван халăхăн шанчăклă ывăлĕ, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнакансемпе пĕринпе те пĕр килĕштермесĕр кĕрешетĕн. Сирĕн йурăсем пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывшăн йăвашланман вăйпа йанраса тăччăр, тесе Сире нумай çулсем хушши пурăнма сунатăп“.

(ТАСС).

Аджари республики 17 çул тултарни

БАТУМИ, мартăн 19-мĕш. Аджаринче Совет влаçĕ туса хуни 17 çул тултарнă йатпа мĕн пур предприйатисенче тата колхозсенче пысăк хаваслăхпа чаплă пухусем пулса иртнĕ. Пухусенче ĕççыннисем республикăри социалисăмла строителствă итогне шута илсе тухнă.

Совет влаçĕ пулнăранпа Аджари АССР сăн-пичĕ тĕпренех улшăннă. Вăкă аластаlă предприйатисем вырăнне чи çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарнă 38 пысăк заводсемпе фабрикăсем ӳссе ларнă. Промышленнăç продукцийĕ 106 хут ӳснĕ тата 1937 çулта унăн хакĕ 180 мĕлйун тенкĕлĕх ытла пулнă.

Аджари республикинчи колхоз хресченĕсем пит те пысăк çитенӳсем тунă. Колхозсен тупăшĕ йулашки виçĕ çул хушшинче 7,6 хут ӳснĕ.

Культурă строителстви ӳсет. Халь Аджари республикинче 361 шкул пур. 1921 çулта 38 шкул çеç пулнă. Вăл шкулсенче 33 пин çын вĕренет.

(ТАСС).

ЙУТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Польшă ультиматумĕ Литва сеймĕнче

Франци хаçачĕ „Тан“ Литва сеймĕн ларувĕ çинчен отчот çырса кăларнă. Вăл ларура Польшă ультиматумне йышăнмала тунă. Ларура Литва премйерĕн вырăнĕнче ĕçлекен Станишаускис çапла каланă: Литва правителстви аслă державăсен правителствисенчен, вĕсене миршĕн хăрушлăх пулса тăнине асăрхаттарса, Литвана хăйсен политикăла тайăмĕпе пулăшма ыйтрĕ,—тенĕ.

„Телейсĕре,—тенĕ вăл,—вĕсен тăрăшни ультиматум йама Польшăна чăрмантарма пултараймарĕ. Çакăн пек условисенче Литва правителстви Польшă требованийĕсене пăхăнма йышăнчĕ. Литва правителстви, пĕтĕм Литва халăхе хăйĕн никама пăхăнманлăхне вĕçне çитийех сыхлама хатĕр тăнине пĕлсе тăнă çинчех, çак решенине йышăнмала пулнă“.

(ТАСС).

Австрири фашисла террор

Швейцарири „Националь цейтунг“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕсем Австрине пырса кĕнĕ хыççăн, чикĕри отрйадсем пичетленĕ кĕнекесем илнĕ, вĕсенче „государствă тăшманĕсем“ текен çынсен пурин хушамачĕсене те кăтартнă. Çак кĕнеке тăрăх чикĕри влаçсем чикĕ урлă каçса йутçĕршывсене тарма хăтланакансене пурне те тытаççĕ.

Австрире арĕслесси тата хăйсене хăйсем вĕлересси çаплах пулса пыраççĕ. Вена хулинче малтан министр пулнăскер Нейштедтер-Штӳрмер, „Нейе Фрейе прессе“ йатлă хаçатăн ответлă редакторĕ Курт Доннефельд, паллă историк Фридел хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

(ТАСС).

Америкăра çĕнĕ самольот тăваççĕ

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче трансатлантикă линийĕпе пассажирсем илсе çӳрекен пысăк самольот конструкцине туса пĕтернĕ. Англин „Дейли експресс“ йатлă хаçачĕ çырнă тăрăх, çак самольот, хăйпе пĕрле 120 пассажир тата 16 çынлă командă илекенскер, Атлантикă океанĕ урлă 12 сехетре вĕççе тухма пултарать.

Вăл самольотран, — тесе кăтартать малала хаçат, — темиçе сехет хушшинчех ниçта анса лармасăр 19 пин километр хушши вĕçме пултаракан тата сехетре 480 километр хăвăртлăхпа вĕçме пултаракан йăвăр бомбардировщик тума пулать.

(ТАСС).

Чехословаки правителствине кăштах çĕнетсе урăхлатнă

Прагăран пĕлтернĕ тăрăх, Чехословакинче правителствăна кăшт çĕнетсе урăхлатнă. Правителствă составне „Народни С'едноцени“ парти (Чехословакири промышленнăç тата финанс буржуазин реакцилĕ партийĕ) представителне кĕртнĕ.

Чехословакири коммуниссен „Руде право“ хаçачĕ çапла çырать: „Вăл партин нимĕнле массăла вăйĕ та çук. Правителствăна шанчăксăр парти кĕрет, вăл унта капитульантсен влийанине вăйлатать çеç“.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра мартăн 19-мешĕнче фашиссен çарĕсем, авиаципе артиллери пулăшса пынипе, Альканьиз секторĕнче республикă çарĕсем çине хытăн атакăланă. Çавна пула республикă çарĕсене Ла Кодоньертан (Альканьизран кăнтăрпа хĕвелтухăç йеннеле) тухса кайма тивнĕ.

Италипе Германи самольочĕсем Каталонири мирлĕ хуласем çине халĕ те пĕр шеллемесĕр бомбăсем параххаççĕ Таррагонре 40 çурта йахăн ишĕлтерсе антарнă. Вилнисем 17 тата аманнисем 50 çынна йахăн шутланаççĕ. Винаросра госпитале çĕмĕрсе тăкнă.

(ТАСС).

Барселонăна бомбăсемпе çĕмĕрни çине Америкăра мĕнле пăхаççĕ

Италипе Германи авиацийĕ Барселонă çине тăтти-сипписĕр бомбăсем пăрахни Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи халăхсене хытăн тарăхтарать.

Америкăри чылай хаçатсем çапла çыраççĕ: Германипе Итали Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчен вăрçă хатĕрĕсене сутăн илсе, вĕсене Испанири пăлхавçăсем патне асатаççĕ. Çапла вара «Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем, — тесе çырать «Нью-Йорк пост» хаçат,—Барселона çине хăрушлăн бомбăсем пăрахнинче кăштах айăпла пулса тăраççĕ».

Хаçатсем—Германипе Италине вăрçă хатĕрĕсене сутма чарма ыйтаççĕ.

(ТАСС).

Йулашки хыпарсем

ПОЛЬШĂ АГРЕССОРĔСЕМ ЧАРĂНМАÇÇĔ

Мартăн 19-мĕшĕнче Варшавра демонстраци пулса иртнĕ. Вăл демонстрацийĕ Польшă фашисĕсем Польшă Литвана „çĕнтерне“ майпа: „Икĕ халăха—полйаксемпе литовцăсене пĕрлештерес“ лозунгпа организациленĕ. Ку лозунг Германи фашисĕсем Австрийĕ тытса илес умĕн Австри халăхĕ пирки каланине аса илтерет.

(ТАСС).

ПОЛЬШĂПА ЛИТВА ХУШШИНЧИ ХИРĔÇӲ ПИРКИ ФРАНЦИРЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

Литва правителствине пана Польшă ультиматумне Францире коллекивлă хăрушсăрлăх политикине гитлерла агреççи меточĕпе çĕнĕрен йăвăррăн çапни вырăнне хурса хаклаççĕ. Сылтăм пичет те çапла палăртать: Польшăпа Литва хушшинчи йăвăр лару-тăрусем çав çĕршыв ем хушшинче дипломатилĕ килĕшӳве çĕнĕрен йĕркеленипе кăшт та пĕтмеççĕ, çĕнĕ тапхăра çеç кĕреççĕ.

(ТАСС).

МАКАР МАЗАЙĂН ÇĔНĔ ÇĔНТЕРĔВĔ

МАРИУПОЛЬ, мартăн 20-мĕш. (ТАСС). Мартăн 19-мĕшĕнче çĕршывăн чаплă сталеварĕ Макар Мазай çĕнĕ чаплă çĕнтерӳ тунă. Вăл пĕр тăваткăл метр кăмака тĕпĕнче 17,84 тоннă хурçă шăратса кăларнă. Ку вăл кăмакан техникăлă вăйхăватĕнчен 10 тоннă ытларах шăратса кăларни пулать.

РАЙОНРИ ХАÇАТĂН АКА ВĂХĂТĔНЧЕ ВЫРĂНА ТУХСА ÇӲРЕКЕН РЕДАКЦИЙĔ

ДНЕПРОПЕТРОВСК, мартăн 20-мĕш (ТАСС). Геническ районĕн хаçачĕ çураки вăхăтĕнче районри чылай колхозсене вырăна тухса çӳрекен редакци кăларса йанă.

Вырăна тухса çӳрекен редакци колхозниксен ăмăртуне организацилет, стахановецсен ĕçне çутатать, вĕсемпе кашни кунах канашлусем туса ирттерет, ку канашлусенче ĕç итогĕсене сӳтсе йаваççĕ.

Комсомол организацийĕсен нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи ĕçĕ çинчен

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕ Азербайджан, Казахстан тата Узбекистан комсомол Тĕпкомĕсен доклачĕсем тăрăх йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Совет влаçĕ ПСК(б)П йертсе пынипе пурнăçа кĕртсе пыракан ленинла-сталинла нацилĕ политикă совет çамрăкĕсене, вĕсем мĕнле нацирен тухнине пăхмасăр, социалисăмшăн кĕрешес ĕçе активлăн хутшăнма пур майсем те туса пачĕ. Совет влаçĕ тăнă çулсем хушшинче нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи çамрăксем хушшинчен трактористсемпе комбайнĕрсем, техниксемпе инженерсем, педагогсемпе врачсем, тĕрлĕрен хуçалăх тата совет учрежденийĕсен руководителĕсем пулса ĕçлекен çĕр-шер пин çамрăк çынсем ӳсе мала тухрĕç.

Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи ĕççынни çамрăкĕсем кирек мĕнле квалификацилĕ ĕçе, кирек мĕнле специальнăçа та вĕренме пултараççĕ. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи çамрăксемшĕн пур вĕренӳ заведенийĕсен алăкĕсем те уçă. Азербайджан шкулĕсенче 549 пин ача, Узбекистанра—900 пин, Казахстанра—947 пин ача вĕренеççĕ. Азербайджанри техникумсемпе аслă шкулсенче 30 пин, Узбекистанра—35 пин, Казахстанра—29 пин çын вĕренеççĕ.

Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи çамрăксем политика тата культура тĕлĕшпе ӳсеççĕ, вĕсен политикăлă активлăхĕ хăпарать, ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра çамрăксем ăна уйрăмăнах уçăмлăн кăтартса пачĕç.

Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол организацийĕсен, чи малтан, çамрăксене вĕсен ĕçĕнче, кĕрешĕвĕнче тата вĕренĕвĕнче йертсе пымала, пĕтĕм çамрăксене Ленин—Сталин партийĕн задачисене пурнăçа кĕртесси тавра организацилесе пĕрлештермеле. ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн пленумĕ çакна паллă тăвать: комсомолăн организацилĕ-политикăлă ĕçĕ çамрăксен политикăлă тата культурлă ӳсĕмĕнчен йулса пынă пирки, Азербайджанри, Узбекистанри тата Казахстанри комсомол организацийĕсенчен нумайĕшĕ хăйсен çак чи пысăк ĕçне çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ.

Комсомолăн организацилĕ-политикăлă ĕçĕ çамрăксен ӳсĕмĕнчен кайа йулса пыни, чи малтан комсомол организацийĕсен идейлă воспитани ĕçĕ çителĕксĕр пынинче пулать. Сăмахран, Казахстанра 50 пине йахăн комсомолец çак тарана çитсе те нимĕнле политшкулсемпе кружоксенче те вĕренмеççĕ. Комсомолецсен политикăна вĕренмели пĕтĕм шкулĕсемпе кружокĕсем валли республикăра 100 пропагандис çеç хатĕрлеççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем ПСК(б)П историне вĕренме тем пек хытă туртăннине пăхмасăр, комсомол комитечĕсем большевиксен партийĕн историне вĕренме шкулсемпе кружоксем организацилемеççĕ.

Çамрăксене ĕççыннисен революцичĕнхи пурнăçĕпе паллаштармасăр, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе рабочи клас ĕлĕк пусмăрта пулнă халăхсене нацилĕ пусмăрпа чуралăхран хăтарассишĕн паттăрăн кĕрешнипе çителĕклĕ паллаштармасăр, Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан Тĕп Комитечĕсем пысăк йанăш тăваççĕ. Комсомол организацийĕсен йертсе пыракан работникĕсем нумайĕш политграмăта усăли çинчен сӳпĕлтетеççĕ, çав вăхăтрах комсомол политшкулĕсемпе кружокĕсене кирлĕ политикăлă литературăна вырăнти наци чĕлхи çине куçарассине организацилемеççĕ. Хăшпĕр нацилĕ республикăсемпе облăçсенче Ленинла комсомолăн программипе уставне те куçарса кăларман.

Çамрăксем культурăшăн, вĕренӳшĕн хытă çуннине курнă çинчех, комсомол комитечĕсем массă хушшинче культура тата пĕтĕмĕшлĕ вĕренӳ ĕçне сарас тĕлĕшпе питĕ сахал ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах комсомол çамрăксем хушшинче хутла пĕлменлĕхе тата сахал пĕлнине пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçленине чăтма çук. Хутла пĕлменнисем комсомолецсем хушшинче те пуррине кăтартакан намăс фактсем çавăнтан çеç килеççĕ.

Комсомолăн организацилĕ-политикăлă ĕçĕ çамрăксен ӳсĕмĕнчен йулса пынине малта пыракан çамрăксене комсомола питех çителĕксĕр йавăçтарса пыни уйрăмăнах уççăн кăтартать. Казахстан комсомол организацийĕ 1937 çулхи тăхăр уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 23.787 çынна çеç йавăçтарнă, Азербайджан комсомол организацийĕ çав срукрах пĕтĕмпе 11.330 çын çеç илнĕ, Узбекистан комсомол организацийĕ 1937 çулхи 6 уйăх хушшинче пĕтĕмпе 10.491 çын кăна илнĕ. Азербайджанри нефт промышленнăçĕнче ĕçлекен комсомолецсен хисепĕ 1937 çул хушшинче ӳсмен çеç мар, кайала та чакнă. Казахстанра—2.789 колхозра, Узбекистанра—3.750 колхозра çак тарана çитсе те комсомол пуçламĕш организацийĕсем çук.

Комсомол комитечĕсем, уйрăмăнах Казахстан комсомолĕн обкомĕ, сайра хутра çеç мар комсомол ӳсĕмне хăйсем чармантарса пыраççĕ. Сăмахран, акă Казахстанри 113 райкомра комсомола илме ыйтса пана 5.683 заявленине чылай вăхăт хушши пăхса тухмасăр выртарнă.

Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомол организацийĕсем хăйсен ĕçне район центрĕсенчи çамрăксем хушшинче ытларах туса пыраççĕ, колхозсенчи çамрăксене, уйрăмăнах пуçламĕш организацисем çук çĕрте, пачах куç хыçне тăратса хăвараççĕ.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн пленумĕ комсомол работникĕсенчен нумайĕшĕ çамрăксен кулленхи пурнăçĕнчен уйăрăлса кайнине, феодалисăмпа крепостничества йулашкийĕсемпе кĕрешсе пыманнине паллă тăвать. Халăх тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринцăсем тата буржуалă националиссем, комсомолăн ку йĕнĕпе ĕç çителĕксĕр пынипе усă курса, çамрăксем хушшинче феодалисăмпа байсенчен йулнă йăласене, тĕн хушакан обрйадсене çирĕп тытассине, калым тӳлес, хĕрсене пĕчĕклех çураçтарса качча илес, хĕрарăмсене чадр, паранджа т. ыт. пĕркентерсе çӳретес пăрахăç йăласене пур майсемпе сарма тăрăшнă. Феодалисăмпа байсенчен йулнă йăласене уйрăм комсомолецсем тата активиссем те тытнине, тĕл пулсан та, комсомол комитечĕсем вĕсене татăклă отпор памаççĕ. Хĕрарăм çине феодалла-крепостникла пăхасси комсомолецсемпе активиссем хушшинче те вĕсен хăшпĕр пайĕнче пур. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенче комсомолăн йертсе пырас ĕçĕнче хĕрсем питĕх те сахал ĕçлени ăнсăртран пулман. Казахстанра комсомол райкомĕсен 166 çекретарĕ хушшинче хĕрсем 6 кăна, Узбекистанра—4, Азербайджанра пĕрре те çук.

Çĕнĕ шкулсем тăвас тата уçас, учебниксем, вĕренмели пособисем кăларас тата учителсен кадрĕсене хатĕрлес ĕçри тăшманла сăтăрлăха пĕтерес тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем халăх çутĕç органĕсене çителĕклĕ пулăшмаççĕ. Комсомол организацийĕсенчен нумайĕшĕ нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи ĕççыннисене аслă вырăс халăхĕн культуринчен уйăрса йарасси патнеле туртнă тăшманла ĕçе курайман йулнă, халăх тăшманĕсем нацилĕ шкулсенче, техникумсенче тата аслă шкулсенче вырăс чĕлхине, вырăс литературине вĕренес ĕçе аркатса тăкма хăтланнине кураймасăр йулнă.

Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомолĕн ĕçĕнчи çак пысăкран та пысăк çитменлĕхсем пĕтĕмĕшпех, чи малтан, комитетсенчен нумайĕшĕ чылай вăхăт хушши тăшманла тата пăсăлса кайнă елементсемпе, çамрăксенчен хăпанса кайнă çынсемпе çӳпĕленсе тăнă пирки пулнă. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенче комсомолăн организацилĕ-политикăлă ĕçĕ çамрăксен ӳсĕмĕнчен йулса пынин чи пысăк сăлтавĕсенчен пĕри—комсомол ĕçĕнчи работниксенчен нумайĕшĕ политика тĕлĕшпе вĕренменни йе сахал вĕренни пулать. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол ĕçĕнче палăракан çав çитменлĕхсем, çавнашкалах тата, вăл организацисенче критикăпа самокритикă куçа кĕретĕнех çителĕксĕр пулнинчĕн килеççĕ. Йертсе пыракан комсомол работникĕсем хушшинче большевикла мар йăласем—çемйелĕх, пĕрне-пĕри йурийех ушкăнĕпе хӳтĕлени тата мăнаçланни пур. Хăш-пĕр комсомол комитечĕсен ĕçĕнче канцеларлă-бӳрократла йертсе пырас методсем тымар йарсах çирĕпленнĕ. Пуçламĕш организаци ене тĕреклетме тăрăшас вырăнне, комсомолецсемпе çамрăксене хумхантаракан ыйтусене татса пама пулăшас вырăнне, комсомол ĕçĕнчи нумайĕш работниксем вăхăта кабинетсенче ларсах ирттереççĕ, хисепсĕр нумай никама кирлĕ мар решенисемпе постановленисем йышăнаççĕ. Çĕнĕ актива мала кăларма хăрани халĕ те пур. Йертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсене кăларас вырăнне, час-часах пĕр çынсенех вырăнтан вырăна куçараççĕ, çавсем хушшинче вара—çамрăксенчен хăпанса кайнă работниксем те сахал мар.

Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомол Тĕп Комитечĕсем комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи çав пĕтĕм çитменлĕхсемпе начар кĕрешеççĕ. ПСÇЛКС Тĕпкомĕн хăшпĕр пайĕсем, уйрăмăнах, хресчен çамрăкĕсен пайĕ, вĕренекен çамрăксен пайĕ комсомолăн нацилĕ организацийĕсене кирлĕ пек пулăшу памаççĕ, вĕсен ĕçĕн пит те пысăк ыйтăвĕсене ПСÇЛКС Тĕпкомĕ умне лартмаççĕ.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн пленумĕ çапла йышăнать:

1. Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомолĕн пĕтĕм организацийĕсене идейă тĕлĕшĕпе вĕрентсе ӳстерес ĕçе, политикăлă ĕçе татăклăнах лайăхлатма хушас. Политкружоксемпе шкулсенче пур комсомолецсене те политикăна тивĕçлипе вĕрентессине организацилемеле, комсомол пуçламĕш организацийĕсем валли пропагандиссене, агитаторсене тата лекторсене тĕплĕн суйласа уйăрмала. Комсомол Тĕп Комитечĕсене 1938 çул хушшинче республикăсенчи тата облăçсенчи виçĕ уйăхлăх курссенче йалта ĕçлеме: Азербайджанра—500, Узбекистанра—600, Казахстанра—1000 пропагандис вĕрентсе хатĕрлеме хушас. Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан хулисенчи комитетсем çумĕнче комсомол пропагандисĕсене производствăран уйăрмасăр вĕрентсе хатĕрлеме каçхи шкулсем организацилес.

Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомол Тĕпкомĕсен комсомолецсемпе çамрăксем валли 1938 çулта вырăнти халăхсен чĕлхипе политикăлă тата художествăлă литература кăларас пирки хăйсен сĕнĕвĕсене ПСÇЛКС Тĕпкомне, вĕсене пăхса тухма, пĕр уйăх хушшинче тăратмала. Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомол Тĕп Комитечĕсем çумĕнче ача-пăча тата çамрăксем валли литература кăларса тăракан издателствăсем уçма кирлĕ тесе шутлас.

2. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол организацийĕсен чи пысăк задачи вырăнне комсомол пуçламĕш организацисен ĕçне лайăхлатассине, уйрăмăнах кишлаксемпе аулсенче лайăхлатассине, вĕсене малта пыракан совет çамрăкĕсен паттăрла кĕрешекен массăлă организацийĕсем туса хурассине лартас. Комсомол пуçламĕш организацисен пухувĕсене тăтăшах ирттерсе пымала, пухусен кун йĕркине комсомолецсене хăйсене интереслентерекен ыйтусене лартмала, пуçламĕш организацин ĕç ыйтăвĕсене сӳтсе-йавса татма ПСÇЛКС кашни членне хутшăнтармала. Райкомсемпе хула комитечĕсен пленумĕсене, комсомолăн хуларипе районти активĕн пухувĕсене тăтăшах пухмала, вĕсенче, чи малтан, комсомол пуçламĕш организацийĕсен ĕçне организацилĕ-политикăлă çирĕплетес, сойузра тăман çамрăксем хушшинчи политикăлă ĕçе лайăхлатас тата хулари, кишлаксемпе аулсенчи малта пыракан çамрăксен сарлака сийĕсене комсомол ретне йавăçтарас ыйтусене сӳтсе-йавмала.

3. Комсомолăн йертсе пырас ĕçри кашни работникне хăйсен политикăла пĕлевне ӳстересси çине тимлĕхсĕр пăхнине пĕтерме, вĕренĕве тимлесе тытăнма хушас. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол Тĕпкомĕсемпе обкомĕсене комсомол активĕ мĕнле вĕреннине контролĕсе тăрассине организацилеме, вĕренӳ çинчен сӳпĕлтетсе, хăйсем вĕренмен, çак ĕçре ытти комсомолецсене пример парса тăман активиссене çине тăрсах тăрă шыв çине кăларма хушас. Комсомол работникĕсене, большевикла принциплă пулса тата пĕр-пĕрин ĕçĕнчи йанăшсемпе çитменлĕхсене хире-хирĕç критиклесе, хăйсене примерлă тытма хушас пулать. Комсомолăн йертсе пырас ĕçри работникĕсен комитет членĕсен пĕчĕк ушкăнĕ ăшне хупăнса лармала мар, комсомолецсемпе тата çамрăксемпе тачă çыхăнса тăмала, вĕсем хушшинче пропагандăлă тата политикăлă ĕçсене туса тăмала.

4. Комсомол активĕ хушшинче патриархаллă-крепăсла йĕрке йулашкийĕсем çинчен калакан фактсем çине, уйрăмах хĕрсемпе хĕрарăмсем тĕлĕшпе, çĕрĕк килĕштерӳлĕхпе пăхнине сивлесе, пленум нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол организацийĕсене комсомолецсемпе çамрăксен пухувĕсенче хĕрсемпе хĕрарăмсем çине крепăсла йĕрке чухнехи пек пăхакан çынсене питĕ хытă критиклеме, çавăн пек айăп тăвакансене кашнинчех обществăлă йĕркепе тата суда парса çирĕп ответ тыттарма хушать. Çамрăксене хĕрарăмсемпе хĕрсем çине хисеплесе тата йулташла пăхма совет моралĕпе хĕрарăмсен правине хӳтĕлекен совет саккунĕсене пăснине кăтартакан конкретлă фактсене тӳсейми пулма вĕрентмеле. Азербайджан, Казахстан тата Узбекистан комсомол Тĕпкомĕсене, хĕрарăмсен прависене хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлеме республика прокурорĕсем çумĕнче хĕрарăмсенчен уйрăм помошниксем уйăрса лартмала тума ыйтса, хăйсен республикисен правителствисене сĕнӳ пама хушас.

5. Нацилĕ республикăсемпе облăçсен комсомол Тĕпкомĕсене, çĕрĕç органĕсемпе тата совет органĕсемпе пĕрле, çамрăк хĕрарăмсенчен совет, хуçалăх тата культурăпа политика ĕçĕсен тĕрлĕ участокĕсенче ĕçлеме хĕрарăм çамрăкĕсенчен кадрсем хатĕрлеме курссем (трактористсем, суд работникĕсем, колхоз бригадирĕсем, совет органĕсен работникĕсене тата ыт. хатĕрлемели курссем) уçассине анлăн сарса йама хушас. Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомол Тĕпкомĕсене хĕрсене комсомолăн йертсе пырас ĕçне, сăмахран, райком çекретарĕсен ĕçне туса тăма лартассине вăйлатма хушас. Çав шутпа, комсомолкăсене вĕрентме Казахстанра—100 çынлăх, Азербайджанра—50 çынлăх тата Узбекистанра 75 çынлăх курссем организацилес. Комсомолăн йертсе пыракан органĕсене çĕнĕрен суйлассине кĕтмесĕр, пуçламĕш организаци çекретарĕсен пĕррĕмĕш заместителĕсем пулма хĕрсене суйласа лартас, уйрăм райкомсенче, халĕхи штат шутĕнченех, райком çекретарĕсен хĕрсем хушшинче ĕçлекен помошникĕсем пулмала тăвас.

1938 çулта мĕн пур нацилĕ республикăсемпе облăçсенче çамрăк хĕрарăмсен слёçĕсемпе конференцийĕсене ирттерес, вĕсенче çак çамрăк хĕрарăмсем хушшинче ĕçлесси çинчен тата хĕрарăм çине крепăсла йĕрке чухнехи пек пăхассин йулашкисене хирĕç кĕрешесси çинчен сӳтсе-йавмала.

6. Халĕ йалти пур культ-çут учрежденийĕсен (клубсен, вулав çурчĕсен, хĕрлĕ йуртăсен, чайхансен тата ыт.) ĕçĕсене лайăхлатмала, вĕсене тасалăх тата йĕркелĕх кĕртмеле, вĕсене хаçат журналсем, вырăнтан вырăна куçса çӳрекен библиотекăсем тăтăшах парса тăмала тăвас пулать. Вĕсенче тĕрлĕ кружоксем, физкультурă, оборонă, драмă, музыкă, агротехникă кружокĕсем организацилемеле, çавнашкалах тата социалисăм строителствин тĕрлĕ ыйтăвĕсем тăрăх лекцисемпе каласусем ирттермеле. Çамрăк хĕрарăмсене, уйрăмах аулсемпе кишлаксенче, обществăлă-политикăлă ĕçе активлăрах хутшăнтарма хĕрарăмсем валли тĕрлĕ клубсем, хĕрлĕ кĕтессем, шкулсем тата кружоксем уçмала.

7. Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомол Тĕпкомĕсене пурне те пуçламĕш шкулта вĕрентессине ĕçе кĕртме тата шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçĕсене лайăхлатма совет органĕсене пур майсемпе те пулăшма хушас. Нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол организацисен тĕп задачи çутĕç органĕсене учителсене вĕрентсе хатĕрлеме пулăшасси пулать. Азербайджан, Узбекистан тата Казахстан комсомол Тĕпкомĕсене сойузлă республикăсен правителствисене комсомолецсен чи лайăх пайĕнчен учителсем хатĕрлес пирки сĕнӳ тăратма хушас. Шкулсенчи комсомол тата пионер организацийĕсене çирĕплетмеле, вĕсене ĕçре вĕрентсе пымала тăвас тата кашни пионер отрйадне хатĕрленсе çитнĕ пионервожатăй уйăрса памала.

8 Нацилĕ республикăсенчи ÇЛКС Тĕпкомĕсене тата комсомол райкомĕсене комсомолецсемпе çамрăксене вырăс чĕлхине вĕренме кирли çинчен анлăн ăнлантарса парас ĕçе организацилеме, предприйатисенче, колхозсенче, клубсенче, вулав çурчĕсенче вырăс чĕлхине вĕренмели кружоксемпе курссем уçассине анлăн сарса йама хушас.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн пленумĕ нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол организацийĕсене шкулсенче, техникумсенче тата аслă шкулсенче вырăс чĕлхи вĕрентес пĕтĕм ĕçе лайăхлатасси çине уйрăмăнах тимлĕхлĕ пăхма кирлине кăтартса парать. Азербайджан, Казахстан тата Узбекистан комсомол Тĕпкомĕсене, Çутĕç халăх комиссариачĕсемпе пĕрле, нацилĕ шкулсем валли вырăс чĕлхи преподавателĕсене хатĕрлессине лайăхлатма кирлĕ мерăсене йышăнма хушас.

9. ПСÇЛКС Тĕпкомĕ нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи комсомол организацийĕсене комсомол ретĕнче троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла шпионсемпе сăтăрçăсенчен, карьериссенчен, комсомолецсем критиклениине тăнласшăн пулман çынсенчен тасатас ĕçе малашне те хастарлăн туса пыма хушать. Комсомолăн йертсе пырас ĕçне çĕнĕ работниксене, пуçламĕш тата районти организацийĕсенчен илсе хăйулăрах тата çине тăрарах лартса пымала тăвас пулать.

10. Тĕпком бюровне тепĕр виçĕ уйăхран ПСÇЛКС Тĕпком пленумĕн çак постановленине пурнăçа мĕнле кĕртнине тĕрĕслеме хушас.

Партилĕ пропагандăпа агитаци ĕçĕ

(Хроникă)

Агитаторсем хатĕрленеççĕ

Агитацилĕ-массăлă ĕçсене туса пыма ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕ çумĕнче районри партактивран агитколлектив организациленĕ. Ку агитколлективра пурĕ 67 çын. Районра пурĕ 49 агитколлектив, 620 агитатор шутланать.

РСФСР-пе ЧАССР Конституцийĕсене тата вĕсен Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенийĕсене вĕренме кружоксем организациленĕ. Кружоксенче вĕренекенсене хăйсене те пилĕкшер тата вуншар килсем çумне агитаци ĕçĕсене туса пыма çирĕплетнĕ.

Агитколлективсенче тата кружоксенче ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн пĕррĕмĕш Çессийĕн решенийĕсене, РСФСР-пе ЧАССР Конституцийĕсене тата вĕсен Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенийĕсене вĕренеççĕ.

Кăçалхи çул районра агитаторсен курсĕсене икĕ хут ирттернĕ,—55 çын вĕрентсе кăларнă, халĕ тата 28 çын вĕренеççĕ.

* * *

Кувакина районĕнче хальхи вăхăтра 14 агитколлектив, 194 агитатор шутланать. Кăçалхи çул агитколлективсен руководителĕсемпе виçĕ хут семинар ирттернĕ.

Кружоксенче хальхи вăхăтра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренеççĕ. Унсăр пуçне, районри агитколлективсем совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕн материалĕсене тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса пыраççĕ.

Пропагандиссемпе парткабинет пуçлăхĕсен канашлăвĕ

Мартăн 17—19-мĕшĕсенче, Шупашкарта, районсенчи штатлă пропагандиссен тата парткабинет пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Ку канашлура пропагандиссемпе парткабинетсен пуçлăхĕсем хăйсем мĕнле ĕçлесе пыни çинчен каласа пачĕç. Обком секретарĕ Г. Иванов йулташ канашлура пулса, малашне мĕнле ĕçлемели çинчен уççăн та ăнланмала çапла каларĕ:

—„Районсенчи пропагандиссемпе парткабинетсем парти вĕрентӳне тата халăх хушшинчи политикăла агитацине организацилессипе çак йулашки çулсенче чылай çитĕнӳсем турĕ. Анчах, çавăнпа пĕрлех, ку ĕçре çитменлĕхсем те нумай-ха. Кунта тухса калаçакан йулташсем, пурте тенĕ пекех: пропагандăпа агитаци ĕçĕнчи методикă мĕнле пулмала-ха? тесе хăйсене ыйту параççĕ. Анчах вĕсенчен пĕри те çак ыйтăва татăклăн ответлемест. Епĕ хам йенчен çак йулташсене çапла каласшăн: партилĕ пропагандăпа агитаци вăл—чăн пурнăçа питĕ уççăн та тĕрĕс фактăсемпе кăтартса памала; вăл халăхшăн ăнланмала пулса тăмала. Акă ССР Союз Верховнăй Совечĕн суйлавĕ вăхăтĕнче пирĕн хуласемпе йалсенчи халăх хушшинче рабочисемпе колхозниксем хăйсем агитаторсем пулса ĕçлерĕç. Вĕсем, тӳрех калас пулать, хăшпĕр штатлă пропагандиссенчен те иртсе кайрĕç. Мĕншĕн тесен, çак рабочисемпе колхозник-агитаторсем агитаципе пропагандă ĕçне ытлашши сăмахсемсĕр, питĕ ăнланмала чĕлхепе туса пычĕç. Вĕсем халăха пурнăç çинчен тĕрĕс фактсемпе кăтартса вĕрентрĕç. Штатлă пропагандиссем нумай чухне халăха ăнлантарса параймаççĕ, çак тĕлĕшпе вĕсен рабочисемпе колхозник-агитаторсенчен пример илмеле, вĕсен ĕçри опычĕпе усă курмала.

Пропагандисăн хăйĕн те кулленхи ĕçре вĕренсе пымала. Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе лайăх хĕçпăшалланман, художествăлă литературăна тĕплĕн вуласа пыман çын мĕнле-ха пропагандис пулса ĕçлеме пултартăр?“—терĕ Иванов йулташ. Малалла вăл пропагандăпа агитацине практикăла ĕçпе çыхăнтарса пырасси çинчен чарăнса тăчĕ.

Штатлă пропагандиссемпе парткабинет пуçлăхĕсен канашлăвĕ виçĕ кун хушши тăсăлчĕ. Виçĕ кун умлă хыçлăн ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен сӳтсе йаврĕç. Ку ĕнтĕ вăл, паллах, канашлăва килнĕ пропагандиссемпе парткабинет пуçлăхĕсене пысăк усă пачĕ.

Анчах канашлура пĕр çитменлĕх палăрчĕ: унта ĕçри паха опытсем çинчен каласа паракансем сахал пулчĕç. Ку ĕнтĕ канашлăва çителĕклĕ хатĕрленменнинчен те килнĕ.

Н. Косойкин.

И. А. Чудаков йулташа выговор пани тĕрĕс пулман

Комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференцийĕ Шăмăршă райкомол секретарĕ пулса ĕçленĕ И. А. Чудаков йулташа: „Тăшмансемпе çыхăнӳ тытать, тăшмансемпе кĕрешмест, политикă тĕлĕшĕпе тимсĕр, йăваш чунлă етем“—тесе райкомол секретарĕнчен кăларнă. Чылай вăхăтран ПСÇЛКС Обкомĕнчен Чудаков йулташа айăпласа çырнă материал партин Шăмăршă райкомне çитнĕ. Шăмăршă райкомĕ Чудаков йулташ ĕçне пăхса тухса ăна хытă йатламала тунă.

Комсомолăн облăçри XIV конференцийĕ те, Шăмăршă райкомĕ те Чудаков йулташ пирки йышăннă решени тĕрĕс пулман. Партин Шăмăршă райкомĕ халь хăйĕн йăнăшне тӳрлетрĕ.—И. А. Чудаков йулташа хытă йатламала тунă решенине улăштарнă.

Н. К.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн решенийĕсене тата суйлав Положенине вĕренеççĕ

ПСÇЛКС Шăхасан райкомĕ комсомол Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕн решенийĕсене вĕренес ĕçе организацилерĕ. Малтан район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен комсомолецсен пухувĕсем пулса иртрĕç. Райĕçтăвком çумĕнчи комсомолецсен пухувĕнче райком секретарĕ Г. Захаров йулташ доклад туса пачĕ.

Райкомол Тĕпком пленумĕн решенийĕсене колхозсенчи пуçламĕш организацисенче ăнлантарса пама вырăнсене çынсем йачĕ. Чернов.

* *

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени“ „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра пичетленсе тухсанах, епĕр, Арзамас хулинчи командирсемпе красноармейцăсем, ăна тĕплĕн сӳтсе-йаврăмăр.

Халĕ „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенине“ вĕренес тĕлĕшпе пирĕн ротăра икĕ кружок ĕçлет. Романов.

— 0 0 —

Елекçĕ Сидоров

ТРАК Улари „Коминтерн“ колхоз членĕ Сидоров Кузьма колхозри, йалсоветĕнчи активиссем çинчен, йалти учителсем çинчен елеклĕ жалăбăсем çырса варалама тăрăшать. Елек сарас ĕçре хăйне пулăшса пымашкăн хăй валли „помошник“ те тупнă вăл. Унăн „помошникĕ“—Семенов Михаил.

Икĕ тус—Сидоровпа Семенов колхоз председателĕ Йефимов йулташ çинчен елеклĕ материалсем пуçтарса, ăна айăпласшăн пулнă. Çав шухăшпа вĕсем урампа иртсе пыракан Петр Харитонова чĕнсе илсе çапла каланă:

—Пайан колхозра пуху пулать. Районран килеççĕ. Есĕ, Харитонов, пухура—„колхоз председателĕ Йефимов мана хĕнерĕ, таран çыртса пĕтерчĕ“—тесе кала.

Колхозăн отчотлă пухувĕ уçăлнă. Ку пухура елекçĕ Сидоровпа Семенов колхоз председателĕ Йефимов йулташ çинчен темĕн те пĕр каласа суйнă, ăна колхоз председателĕнчен кăларасшăн пулнă.

Камсем-ха çак елекçĕсем? Сидоров иртнĕ вăхăтсенче хиртен кĕлте вăрланă, кооператив укçине 545 тенкĕ салатнă. Колхозра тăрăшса хĕрӳлĕн ĕçлесе пыракансем çинчен тĕрлĕ елек сарса ĕçе тустарма тăрăшнă. Арăмне йурийех колхоза кĕртмен. Хăй вăл нойабĕр уйăхĕнчен вара колхозра пĕр ĕç кунĕ те туман.

Семенов — государствăн тыррине 25 пăт вăрласа сутнă, вăл виçĕ хут судпа айăпланнă ĕнтĕ.

Етем сăн-сăпатне çухатнă çак çынсем — елекçĕсем колхоз правленинче лайăх ĕçлесе пыракан йулташсене вараласа ĕçрен кăларса, колхоза руководствăсăр хăварасшăн пулнă.

Халь елекçĕсене тăрă шыв çине кăларнă. Вĕсене тивĕçлипе айăпламала.

Закамский,
Г. Николайев.

Ăмăрту договорĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн

Иртнĕ çулта Йелчĕк районĕ Патăрйел районĕпе ăмăртса ĕçлесе, вăйлă тырпул туса илчĕ. Бурмистров комсомолец йертсе пыракан „Ново-Ишчерйаково" колхоз 168 гектар çинчен 155-шер пăт тĕштырă туса илнĕ. Аслă Йелчĕкри Ленин йачĕпе тăракан колхоз, Кушкăри „КИМ" колхозпа ăмăртса ĕçлесе, 60 гектар çинчен 200-шер пăт тулă туса илнĕ.

Çак çитĕнÿсем иртнĕ çулхинчен те вăйлă тырпул туса илес çĕрте татах та хастарлăн ĕçлеме хушаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Йелчĕк районĕнчи колхозниксем Патăрйел районĕнчи колхозниксемпе социалисăмла ăмăртува тухса, хăйсем çине татăклă обйазателствăсем илчĕç.

Йелчĕк районĕ кăçал гектартан вăтам шутпа 120 пăтран кайа мар тĕш...ă, кантăр сÿсĕ 35 пăт, çĕрулми—950 пăт, клевĕр вăрлăхĕ—2,5 центнертан кайа мар туса илме палăртнă.

Çак татăклă обйазателствăсене пурнăçлассипе районри колхозсем вирлĕн кĕрешĕве хутшăнчĕç. Районра 52 колхоз. Вĕсенчен 50 колхозĕ социалисăмла ăмăртува тухнă. Нумай колхозсенче бригадăсем те ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çураки çывхарса килнĕ май, ăмăртакан „Ново-Ишчерйаково", „Осоавиахим", „КИМ" тата Ленин йачĕпе тăракан колхозсем çак кунсенче ăмăрту договорĕсене тĕрĕслерĕç. Мартăн 10-мĕшĕнче Ленин йачĕпе тăракан колхозри бригадирсемпе стахановецсем „Осоавиахим" колхоз çуракине мĕнлĕ хатĕрленсе пынине пăхса тухрĕç. Тĕрĕслÿ „Осоавиахим" колхоз çуракине хатĕрленсе çитменнипе палăртрĕ.

Ăмăрту договорĕ çинче кăтартнă тăрăх, мартăн 10-мĕш тĕлне 3900 лав тислĕк уйа кăлармала пулнă, 3090 лав çеç кăларнă. Торф пĕр лав та кăларман т. ыт. те. Минераллă удобренисене те кирлĕ таран кÿрсе килмен. Агрокружок çителĕксĕр ĕçлет. Аслă Йелчĕксем „Осоавиахим" колхозра лашасене начар пăхнине те палăртрĕç. Çураки вăхăтĕнче ĕçлемели лашасем ырхан. Вĕсене ака вăхăтĕнче çитерме фураж çителĕклĕ таран хатĕрлемен.

Çавнашкалах Киров йачĕпе тăракан колхоз та „Социалисăм" колхозпа тунă ăмăрту договорне тĕрĕслерĕ. Вăл „Социалисăм" колхоз договор çинче кăтартнă пунктсене пурнăçлассине ытла та çителĕксĕр ĕçлесе пынине палăртрĕ. Пайанхи куна çитсе те „Социалисăм" колхоз вăрлăхсене суртласа пĕтермен. 440 центнер вырăçне 191 центнер çеç суртланă. Плугсемпе культиваторсене йусаман, вĕсем йур айĕнче лараççĕ. Лашасене кÿлмели хатĕрсене йусассине аса та илмеççĕ.

Районта пурĕ 172 сейăлкă, вĕсенчен 149 сейăлкă çеç йусанă. Районĕпе 150.000 лав тислĕк уйа кăлармала пуллă пулсан 86.133 лав çеç кăларнă. Çавнашкалах ытти минераллă удобренисене пухассипе те чăтма çук кайа йулса пыраççĕ. Колхозниксене агротехникăна вĕрентес тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕ йертсе пымасть. Кружоксене йавăçтарнă колхозниксемпе никам та ĕçлемест. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем айакри колхозсене кайса та курмаççĕ.

Ф. Майков.

Кăвакарчăн тислĕкĕ пысăк усă паратъ

Хурăнла-Чăкăрти „Çĕнĕ йал" колхоз членĕ (Шупашкар р.) Варламов Александр çĕре çемçетмели йапаласем хатĕрлессипе пит тăрăшса ĕçлет. Нимрен ытла вăл кăвакарчăн тислĕкĕ пухса колхоза паратъ. Кăвакарчăн тислĕкĕ мĕнле усă панине çинчен вăл акă мĕн калатъ:

„Граждăн вăрçинчен таврăнсанах епĕ çамăн кил хушшинче кăвакарчăнсем усрама тытăнтăм. Малтанах вĕсене ваљљи вырăн туса патăм, кулленех апат параттăм, шăвараттăм. Çапла майпа кăвакарчăнсене хам патра пурăнма вĕрентрĕм. Кăвакарчăнсен йышĕ хутшăнма тытăнчĕ.

Кăвакарчăн тислĕкне çăнăх пек вĕтететтĕмччĕ те урпа, кантăр анисем çине сапаттăмчĕ. Кăвакарчăн тислĕкĕпе çемçетнĕ ана çинчи урпа та, кантăр та раснах лайăх: хăмăлĕ те çÿллĕ, пĕрчисем те таса тата шултра пулатчĕç. Колхоз пуçланнăранпа тислĕке колхоз çĕрне çĕмĕçтерме пама пуçларăм.

Епĕ колхоза 1936 çулта 80 пăт, 1937 çулта 110 пăт, 1938 çулта 200 пăт кăвакарчăн тислĕкĕ пухса патăм. Ку колхоза та, хама та усăллă. Акă, кăçал пухса панă 200 пăт кăвакарчăн тислĕкĕшĕн 320 ĕçкунĕ параççĕ. Пĕлтĕрхи пек ĕçкунĕ пуçне çуршер пăт тĕштырă тивсен те манăн 160 пăт тырă пулатъ.

Халљхи вăхăтра ман килкарти тавраşĕнче 300 кăвакарчăн ытла пурăнатъ. Вĕсене ваљљи епĕ пÿрт тăррине çулçă, тата опилкă сарса панă. Çитес кĕркунне кăвакарчăнсен йышне 500—600 çитеретĕп. Колхоза кăçалхинчен те тислĕк нумай туса парса вăйлă тырпул туса илме пулăшатăп.

Епĕ тăрăшса ĕçленине шута илсе, колхоз правленийĕ кăçал мана пĕр мăшăр сăран атă тата февралĕн 25-мĕшĕнче пулса иртнĕ районри колхозник ударниксен сйесĕнче 75 тенкĕ укçа парса премилерĕç. „Çак премисем мана халљхинчен те ытларах тăрăшса ĕçлеме хушаççĕ"—тет Варламов йулташ.

Е. Василйев.

Пиншер тенкĕ ĕçлесе илеççĕ

КАНАШ. Вагонсем йусакан заводри кузнечнăй цехри рабочисем техникăна вĕренмели кружоксенчен вĕренсе тухнă хыççăн аван ĕçлеме пуçларĕç. Акă Николай Самсонов тимĕрçĕ кашни кунах 120 штук кљопкă пĕçерес вырăнне 300—350 штук пĕçерсе кăларатъ. Февраљ уйăхĕнче Самсонов 663 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Самсонов йулташ обшчествăлă ĕçре те хастарлă ĕçлет. Вăл хăйсен уйрăмĕнчи профгрупорг пулса ĕçлет. Кăнтăрлахи кану тата ытти пушă вăхăтсенче рабочисене хаçатсем вуласа паратъ, çĕнĕ хыпарсем çинчен каласа ăнлантаратъ.

Рйабинин, Варварин, Пекшин йулташсем те кулленхи нормăсене 250—350 процент тултарса ĕçлеççĕ. Акă Иван Варварин февраљ уйăхĕнчи плана 295 процент тултарса 1151 тенкĕ, Иван Пекшин 358 процент тултарса 1298 тенкĕ, Ф. Рйабинин 824 тенкĕ ĕçлесе илчĕç.

Халĕ вĕсем март уйăхĕнче татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

М. М.

Вăрман хатĕрлевĕ

Йĕпреçпе Вăрнар вăрманпромхозĕсен ăмăртăвĕ

Пĕрремĕш квартăлти, çавăн пекех 1938 çулти вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн Йĕпреçпе Вăрнар вăрманпромхозĕнчи рабочисемпе инженерла техникла работниксем, служăшчисем тата Йĕпреçпе Вăрнар районĕсенчи колхозсемпе йалсоветсем социалисăмла ăмăртăва тухнă. Ăмăртакансем пĕрремĕш квартăлти плана хатĕрлессипе мартăн 25-мĕшĕнче, турттарассипе апрелĕн 1-мĕшĕнче тултарма пулса, кашни уйрăмăн хăйсем çине татăклă обйазателствăсем илнĕ.

Йĕпреç вăрманпромхозĕ пĕрремĕш квартăл пĕтиччен вăрманпромхозри рабочисем тата колхозниксемпе йединоличниксем ĕçленипе 56 пин фесметр йăвăç хатĕрлесе, 65 пин фесметр турттарса кăларма пулнă. Механисăмсемпе 19 пин фесметр турттарса кăлармала. Кусене пурне те лайăххăн пурнăçа кĕртме ĕç тухăçлăхне ÿстерни кирлĕ. Вăрманпромхоз ку йенĕпе те чылай ĕçсем тума палăртнă. Кашни машинпа пĕр рейсра 4 фесметр, кашни лашапа куллен ахаљ çул тăрăх 3 фесметр, пăрлă çул тăрăх 5 фесметр турттарса тухмала. Вăрмана талкăшпех каснă çĕрте кашни çын пуçне кунсерен 4 фесметр, суйласа каснă çĕрте 2,5 фесметр касса хатĕрлемеле. Рационализациленĕ инструментсемпе туллин усă курассине йĕркелеме март уйăхĕнче лучковой пăчкăпа ĕçлекенсен хисепне 100 çынна çитерме палăртнă.

Вăрнар вăрманпромхозĕ те хăй çине пысăк обйазателствăсем илнĕ. Унăн 88 пин фесметр йăвăç хатĕрлесе 97 пин фесметр турттарса кăлармала. Механисăмсемпе 27 пин фесметр турттармала. Вăрнарсем кашни машинпа пĕр рейсра 3,6 фесметртан кайа мар, кашни лашапа куллен пăрлă çулсем тăрăх 7 фесметр, ахаљ çулсем тăрăх 1,5 фесметр турттарса кăларма пулаççĕ.

Ăмăртăва хутшăннă Йĕпреçпе Вăрнар районĕсенчи колхозсемпе йалсоветсем вăрманта ĕçлеме ĕçпе туртăм вăйĕ кирлĕ таран организацилеме сăмах параççĕ. Йĕпреç районĕнчи колхозсем куллен çуран ĕçлекенсем 540 çын, лашапа ĕçлекенсем 1300 çын тата Вăрнар районĕ 1000 çуран çын, 800 лав парса тăма пулатъ.

Ăмăртакан вăрманпромхозсемпе районсем хăйсем умне пысăк та ответлă задачăсем лартнă. Вăл задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессине, пĕтĕм ĕçе стахановла йухăмпа социалисăмлă ăмăртăва анлăн вăйлатса пынă никĕс çинче организацилени, вăрманта ĕçлекенсем ваљљи ĕçлеме, пурăнма лайăх условисем туса пани татса паратъ. Çавăнпа вăхăта вăраха йамасăрах пĕтĕм рабочисемпе инженерла-техникла работниксене социалисăмла ăмăртăва йавăçтармала. Ăмăртура лайăх тĕслĕхсем паракан бригадăсен, рабочисен, тракториссемпе шоферсен опычĕсене кунсерен шута илсе пырса, вăл опытсене пур çĕре те сарса пымала. Паллах, ку ĕçе рабочисем хушшинче массăллă агитаци ĕçне вăйлатмасăр тума май çук. Бараксенче хаçатсем вулассине, рабочисемпе калаçусем ирттерессине организацилемеле. Стена хаçачĕсем кăлармала. Производствăлă канашлусем вăхăтра ирттермеле.

Ку таранччен вăрман хатĕрлев планне тултарассине пысăк чăрмав кÿрсе пынă сăлтавсенчен пĕри вăл—вăрманта суту-илÿ ĕçне начар йĕркелени тата рабочисене лайăх условисем туса паманни пулса тăнă. Ку çитменлĕхсене пĕтерме нимĕнле йавăрлăх та çук. Суту-илÿ работникĕсем çине тăрса ĕçлеме тытăнсан, вĕсем хушшинче çирĕп дисциплинă тусан, ларйоксемпе столовăйсен ĕçне кĕске вăхăтрах лайăхлатма пулатъ. Çавăн пекех бараксене йĕркене кĕртесси те вăрманпромхоз работникĕсем рабочисен пурнăçĕпе куллен интересленсе, вĕсен ыйтăвĕсем çине вăхăтра çавăрăнса пăхниинчен килет.

Колхозсемпе йалсоветсен хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене лайăххăн пурнăçа кĕртсе пыма колхозпа колхоз, йалсоветпа йалсовет хушшинче социалисăмлă ăмăртăва вăйлатмала. Вăрмана ĕçлеме кайакан бригадăсене йертсе пырас ĕçе колхозпа йалсовет председателĕсен тата вĕсен заместителĕсен хăйсен аллине илмеле.



Ÿкерчĕк çинче: Умански МТС-че (Кийев обл.) йусанă тракторсене колхозсене йарас умĕн тĕрĕслеççĕ.
А. Иоселевич фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото)

Хаçатсене пăхса тухни

Йăнăшсене хăйулăрах тÿрлетер

А. И. Йенисейов йулташ редакцилесе кăларакан Ишлей районĕнчи „Колхозник хаçачĕ" ПСК(б)П Партин Тĕп Комитечĕн йанварти пленумĕ кăтартса панисене туйса илмен, пленум решенине ăнлантарса памасть, пуçламĕш парторганизацисем тата партин Ишлей райкомĕ хăйсен йăнăшĕсене мĕнле тÿрлетни çинчен статйасем пичетлемест. Хаçат елекçĕсене, карйериссене, хăйсен тирне хÿтлекенсене тăрă шыв çине кăлармасть.

Февралĕн 10-мĕшĕнче „Колхозник хаçачĕ" **„Йăнăшсене бољшевикла тÿрлетер"** йатлă умстатйа пичетлесе кăларнă. Статйара „ПСК(б)П Тĕпком пленумĕ асăрхаттарни, пленум решенийĕнче кăтартнă йăнăшсем партин пирĕн районри организацинче те пулнă" тесе çырнă. Малалла хаçат:

„Колхозник хаçачĕ" те, хаçатра йертсе пыракансем те йăнăш тунă. Хаçат нимĕн сăлтавсăрах Йаковлева, Йефимова халăх тăшманĕсен йатне панă, райĕçтăвком председателĕ пулнă М. А. Алексейевпа пĕрле ĕçленисене халăх тăшманĕсен йатне панă" тесе çыратъ.

Февралĕн 20-мĕшĕнче хаçат каллех тунă йăнăшсем çинчен асăнатъ: „М. Троицкине, Н. Йаковлева, В. Борисова, П. Йефремова нимĕн сăлтавсăрах халăх тăшманĕсен йачĕсене панă" тет хаçат.

Анчах хаçат „йăнăшсем пулнă" тенине витĕнсе, çав йăнăшсене кам тунине, елекçĕсемпе карйериссене, хăйсен тирне хÿтĕлекенсене конкретлăн кăтартса памасть. Парти райкомĕ йенчен те, пуçламĕш организацисем йенчен те (райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш организацире) парти членĕсем çине сăмăл шухăшпа, бÿрократла пăхни пулнă. Тÿрĕ ĕçлекен коммуниссемпе комсомолецсем çине тăшман йарлăкне сыпăçтарни, вĕсене партирен те, ĕçрен те кăларни пулнă.

Çаксене „Колхозник хаçачĕ" тĕплĕн пĕлсе тăни пире нимĕн те иккĕлентермест. Анчах вăл нимĕн те шарламасть, елексарни тăрăх партирен, комсомолран кăларнисене халăх умĕнче тĕрĕсе кăларас, карйериссемпе елекçĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе ĕçлемест. Çак хаçатра Ишлей районĕнчи парторганизаци хăйĕн йăнăшĕсене мĕнле тÿрлетни çинчен пĕр заметкă та, пĕр строка та çук.

Елĕк районĕнчи „Колхоз хаçачĕ" те (Отв. редактор В. П. Курадев йулташ) ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенине пичетлесе кăларнипех лăпланса ларнă. Хаçат йăнăшсене çийĕнчех тата хăйуллăн тÿрлетессине хăйĕн ĕçĕ тесе шутламасть. Йăлтах срăхла, вăл Тĕпкомăн йанварти Пленумĕ хыççăн Иварбейева тата унпа пĕрле ĕçлекенсене тăшман йатне парса тухнă. Вăл статйара (статйа авторĕ Т. Сорин) Иварбейова бандит, сăтăрçă йатне кăштах çеç парайман. Ку йанварĕн 9-мĕшĕнче пулнă. Февралĕн 2-мĕшĕнче хаçат **„Парти райкомĕн решенине пурнăça бољшевикла кĕртмеле"**, февралĕн 5-мĕшĕнче **„ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенине тĕплĕн вĕренмеле"** статйасем пичетлесе кăларнă. Çак статйасенче хаçат: „çак клеветниксем", „карйериссем" хăйсене ыттарса хăварма тăрăшнă. Хăшпĕр комсомолецсем „троцкист", „халăх тăшманĕ" текен сăмахсене хăйсене витĕнме усă курса, çак сăмахсемпе таса çынсенех варалама тăрăшнă" тесе çыратъ. Камсем вĕсем карйериссем? Камсем вĕсем елекçĕсем? Камсем вĕсем таса çынсене варалакансем? Хаçат провакаторсене, елекçĕсене, карйериссене тăрă шыв çине кăлармасть. Вăл пуш сăмах çаптарнипех пирĕн ĕç пĕтет тесе шутлатъ пулмалла. Ку ăнсăртран пулнă ĕç мар. Çак хаçат редакторĕсем парторганизацисемпе, комсомол организацисемпе начар çыхăннă. Çавăнпа та вĕсем парторганизацисем халљхи вăхăтра мĕн тунине, мĕн ĕçленине пĕлмеççĕ, вĕсем çинчен хаçатра çутатмаççĕ, вĕсене Тĕпком Пленумĕн решенине пурнăça кĕртме пулăшмаççĕ.

Хаçатсем хăйсем тунă йăнăшсемшĕн ÿкĕнеççĕ, хăйсене хăйсем вăрçаççĕ. Кăна тума питĕ çăмăл. Кунашкал ÿкĕнсе çырнă статйасем татах та пулма пултараççĕ, анчах ÿкĕнсе çырнипе лăпланса, йăнăшсене тÿрлетес тĕлĕшпе конкретлă ĕç туманнинчен усă çук: Ĕç çине, йăнăша тÿрлетесси çине тимлĕрех, тăнрах пăхмала. Халĕ çак хаçатсенче парторганизацисем, комсомол организацисем, советпа хуçалăх организацисем хăйсен йăнăшĕсене тÿрлетес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине курма хĕн.

Шăлсăр пулни, нимĕн тумасăр ларни—çак хаçатсем çителĕклĕ таран активлă пулманнине, йăнăшсене хăйуллăрах тÿрлетме тăрăшманнине кăтартатъ. Çакнашкал позицире тăни карйериссене, елекçĕсене—партин тата халăхăн усал тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларма, парти Тĕпкомĕн решенине пурнăça кĕртме пулăшмасть.

Вулав çурчĕн ĕçĕсем аванланчĕç

ШĂХАСАН. Йамашри вулав çурчĕ иртнĕ вăхăтсенче питĕ начар ĕçлетчĕ. Унăн пуçлăхĕ Петров йулташ вулав çурчĕ çумĕнче нимĕнле кружок та йĕркелеменччĕ тата час-часах хупă тăратаччĕ.

Çакăн çинчен йалсовет пленумĕнче тата пуçламĕш парторганизацинче ыйту лартса сÿтсе-йаврĕç. Унтах вулав çурт пуçлăхĕн отчотне итлерĕç. Çавăн хыççăн Петров йулташ вулав çурчĕн ĕçĕсене аванлатма пуçларĕ. Халĕ вулав çурчĕ çумĕнче 7 кружок ĕçлет. Акă „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕренмели кружокра 37 çын вĕренеççĕ. Вĕсем пурте ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă чухне ĕçленĕ активиссемпе комсомолецсем тата агитаторсем. Ку кружокра вĕренекенсем колхозниксене бригадăсенчи пухусенче тата ватă колхозниксене килĕсене кайса ăнлантарса параççĕ. Акă, сăмахран, Владимиров комсомолец-бригадир хăйĕн бригадинчи Латышев Александр колхозник çемйине „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине" ăнлантарса паратъ, вĕрентет.

Вулав çурчĕ çумĕнче стена хаçачĕ йĕркелĕ тухса тăратъ.

Агрокружокра пурĕ 87 çын вĕренеççĕ. Вĕсем пурте заљатине йĕркелĕ çÿреççĕ, уроксене тимлĕн вĕренсе пыраççĕ. Халĕ вĕсем минераллă удобренисем çинчен, вĕсемпе мĕнле усă курмали çынчен вĕренеççĕ.

Ал. Иванов.

Техникăна вĕренесси лайăхланчĕ

Шупашкарти спирт заводĕнче иртнĕ çулта техникăна вĕренмели кружоксем кирлĕ пек ĕçлеймен. Кăçал ку ĕç нумай лайăхланчĕ. Йертсе пырас ĕçе лартнă çĕнĕ çынсем кашни цехрах техникăна вĕренмели кружоксем организацилерĕç. Рабочисемпе работницăсем хăйсен техника пĕлĕвне ÿстернĕ май, ĕç тухăçлăхĕ те çĕкленсех пыратъ.

Спирт йухтаракан цехри Пегайева, Василйева, Багоданова йулташсем йертсе пыракан бригадăсем халĕ нормăна 150—180-шер процент тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех тийекен цехри Александрова йулташ та нормăна 250 процент тултаратъ.

Заводра иртнĕ çулта 34 стахановец пулнă пулсан, халĕ 74 стахановец шутланатъ.

В. Василйев.

Потребкоопераци ĕçне тивĕçлĕ вырăна лартассишĕн

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1935 çулта çентăбĕрĕн 29-мĕшĕнче „Йалти потребкоопераци ĕçĕсем çинчен" йышăннă постановленире потребкоопераци умне—колхозниксен куллен ÿссе пыракан ыйтувĕсене пĕтĕмпех таса парас тĕлĕшпе ĕçе тĕпренех лайăхлатас задачăна лартрĕ.

Çакăн пекех Чăваш республикинчи йалхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансем те кăçалхи çураки кампанине бољшевикла ирттерсе йарас ĕçре Чăваш потребкоопераци йапăх пулăшса пынине палăртса, Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1935 çулта çентăбĕрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх потребителсем йенне çавăрăнса пăхмала, вĕсемпе тачăн çыхăнса, колхоз стройне çирĕплетме пулăшмала, тесе хушрĕç.

Чăвашсойузăн 1938 çулта мартăн 10—12-мĕшĕнче пулса иртнĕ пленумĕ—Чăваш потребкооперацин 1937 çулти ĕçĕсен итогĕсемпе 1938 çулти задачĕсем çинчен сÿтсе-йаврĕ.

1937 çулта пĕтĕмпе 1935 мĕлйун тенкĕлĕх тавар сутнă. Йалăн културă ÿсĕмĕ промышленнăç таварĕсене ыйтатъ. Сăмахран 1937 çулта Чăвашпотребкоопераци 11.697 сехет, 598 велосипед, 674 патефон, 1.505 радиоприйомник тата 565 пин тенкĕлĕх музыкă инструменчĕсем сутнă.

Çак йулашки çулсенче районсенче 10 универсаллă магазинсем, 47 йалмагсем, 7 ресторан-столовăйсем, 3 йалти продмагсем çĕнĕрен уçнă.

Советлă суту-илÿвĕн çĕнĕ çыннисем, стахановецсем, отличниксем ÿссех пыраççĕ. Акă Шихабыловори йалпо председателĕ Федоров йулташ. Вăл 1933 çултанпа ĕçлет. Суту-илÿ тата финанс планне çултан çул ытлашшипех тултарса пыратъ. 1937 çулта таварçавăрнăш планне вăл 114 процент тултарнă, унăн растратăсем çук, 1937 çулта йалпо 5.886 тенкĕ таса тупăш илнĕ. Иккассинчи йалпо председателĕ Е. Петрова йулташ потребкооперацинче 1934 çултанпа ĕçлет. 1937 çулта таварçавăрнăш планне 123 процент пурнăçланă, растратă çук. Йалпо 15.000 тенкĕ таса тупăш илнĕ. Федоров (Йелчĕк йалпо председателĕ), М. Калейева (Куславкка йалпо продавецĕ), Горбунов йулташсем стахановла паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Çапла пулин те Чăваш потребкооперацин ĕçĕнче калама çук пысăк çитменлĕхсем пур. Пĕтĕмĕшпе илсен 1937 çулхи таварçавăрнăшне 90 процента йахăн çеç пурнăçланă. 1937 çулта 51 йалпо 731 пин тенкĕ тăкак парса ĕçленĕ.

Чăвашсойузăн системинчи чи пысăк çитменлĕх вăл—растратăсем. 1937 çулта вĕсем чаксах пырас вырăнне, ÿссе пыни палăрчĕ.

Потребкооперацинче ĕçлекен хăш-пĕр йулташсем Сталин йулташ кăтартса панине манса кайнă.

„Пĕрлешÿлĕ харпăрлăха, — тенĕ Сталин йулташ,—пур-пĕрех, государствă харпăрлăхне-и, кооперативлă тата колхозлă харпăрлăха-и, вăрласа çаратма ирĕк пани, тата çавнашкал контрреволюцилĕ киревсĕрлĕхсем çине çавăрăнса пăхманни вăл—пĕрлешÿлĕ харпăрлăх çинче никĕсленсе, тытăнса тăракан совет йĕркине çĕмĕрме пулăшни пулса тăратъ". („Ленинисăм ыйтăвĕсем", X изд. стр.508).

Халăх тăшманĕсем пĕрлешÿлĕ харпăрлăха çаратса пирĕн совет государствин вăй хăватне начарлатма пăхнине Чăвашсойузăн хăшпĕр руководителĕсем манаççĕ.

Халăх тăшманĕсем, пирĕн йенчен политикăла сыхăлăх çителĕклĕ пулман пирки, кооперации ĕçне вырнаçса суту-илÿ ĕçне аркатма хăтланаççĕ, потребкоопераципе массăран уйăрма, куллен кирлĕ таварсене илсе килсе сутассине чарса хума, кооперацири финанс ĕçне аркатса, колхоз потребителĕсем хушшинче кăмăлсăрлăх сарма хăтланаççĕ.

Сăмахран, Çĕнĕ Айбеç йалповĕнче нумайăх пулмасть сăтăрлă, тăшманла ушкăна тăрă шыв çине кăларнă. Çак сăтăрçăсен пуçлăхĕ суйлав правине çухатнă çын ывăлĕ Пеливанов пулнă. Кооперацин укçипе вĕсем пĕрмайăх ĕçнĕ, кирлĕ таварсене илсе килмен, килсен те ĕçкĕлле вăрттăн валеçнĕ. Кунашкал тĕслĕхсем Чăваш Сормăри йалпора, Улатăрти горпора, Канашри базăра та пулнă.

Кооперации аппарачĕсене тĕрĕсленмен çынсем кĕрсе кайни тата кадрсемпе Чăвашсойуз калама çук йапăх ĕçлесе пыни çинчен çак тĕслĕх те аван каласа паратъ. 1937 çулта, йулашки çур çул хушшинче, мĕн пурĕ кооперации ĕçĕнчен 608 çынна хăтарнă. Пайанхи куна кадăрсене тĕрĕслесси, вĕсене куллен пулăшса пырасси, çамрăк стахановецсене, отличниксене ĕçе лартасси йапăх пулса пыратъ-ха.

Тепĕр пысăк çитменлĕх вăл куллен кирлĕ таварсемпе суту-илÿ тăвассине вăхăтран вăхăта чарса лартни пулатъ. 1937 çулта 635 тĕрĕсленĕ магазинсенчен 25 процентĕнче куллен кирлĕ таварсем пулман. Пайанхи кун та Чăвашсойуз базинче махоркăпа спичкăсем çук.

Чăвашсойуз президиумĕ стахановла йухăма йертсе пымасть. Суту-илÿ ĕçĕнче ĕçлекен 4140 çынран социалисăмла ăмăртува 1842 çын çеç йавăçтарнă, пĕтĕмпе те вĕсем хушшинче 194 ударниксем, 75 отличниксем. Стахановецсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе те йапăх ĕçленĕ. 1937 çулта кадрсене хатĕрлеме пăхнă укçаран 330 пин тенкипе усă курман. Чăвашсойуз хăйĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавĕ çинчен йăлтах манса кайнă.

Центросойузра пулнă халăх тăшманĕсем (Зеленский, Майоров т. ыт. те) таварçавăрнăшне тата хатĕрлев ĕçне аркаштарса йанă, куллен кирлĕ таварсене сутас ĕçе йатарласах вăхăтран вăхăта чарса лартнă, обшчествăлă организацисем, тата пайшчиксем йенчен пулса пырас контроља вĕсем йапăхтарнă, йурпйех отчотпа учот ĕçне пăсса пынă, потребкоопераци аппарачĕсене халăх тăшманĕсене кĕртсе лартма хăтланнă, ĕçукçи системине арпаштарнă, т. ыт. те.

Çак асăннă халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсем пирĕн Чăвашсойуз ĕçĕнче те ÿссăнах курăнса тăраççĕ. Апла пулин те Чăвашсойуз халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсемпе çителĕклĕн кĕрешсе пыраймасть.

1938 çулта Чăваш потребкоопераци умĕнче калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ. Чи пысăк задачă вăл—халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕн йулашкийĕсене пĕтересси, кооперацин пĕрлешÿлĕ харпăрлăхне çаратнипе вăрланине тĕппипех пĕтересси пулатъ.

Центросойуз кăçалхи вакkăн суту-илÿ тумали таварçавăрнăш планне 159 мĕлйун тенкĕлĕх çирĕплетнĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан 24 мĕлйун тенкĕ ытла.

Çак задачăсене пурнăçлас пулсан, Чăвашпотребкооперацин уйăхран уйăха, квартăлтан квартăла таварçавăрнăш планĕсене пурнăçласа пымала, йалпори, хулари рабочисен кооперативĕсенчи, райсойузсенчи, базăсенчи пур ĕçлекенсене те социалисăмла ăмăртува йавăçтармала.

Пайшчиксемпе çыхăнса тăрассине лайăхлатмала, вĕсем умĕнче отчотсем тăвассине йĕркелемеле. Йалпо тата райсойузра ĕçлекенсен вĕренÿне организацилемеле, тата çĕнĕрен ĕçре ÿссе пыракан кадрсене ним иккĕленмесĕр пысăкрах ĕçсене лартмала. Лайăх ĕçлекен йалпосен, уйрăм стахановецсен, отличниксен опычĕсене сарса пымала.

Чăвашсойуз системинче организацилĕ ĕçсем питех те йапăхса кайнă. Паллах ку халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕн йулашкийĕсем. Сăмахран: Чăвашсойуз пленумĕн членĕсем 35 пулнă пулсан, иртнĕ пленум 14 член пулнипе уçăлчĕ. Ĕçлекенсем хушшинче дисциплинă йĕркелĕ вырăнта тămасть.

Бољшевикла хастарлăхпа ĕçри самокритикăна тата критикăна сарса йамала, кооперации аппарачĕсенче хĕсĕнсе йулнă халăх тăшманĕсен йулашкисене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкмала.

Чăвашсойуз пленумĕнче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн советла суту-илÿ пайĕн пуçлăхĕ Терентйев йулташ пысăк сăмах тухса, каларĕ. Ун хыççăн нумай делегатсем социалисăмла ăмăртува тухса, таварçавăрнăш планне Сталинла Конституцине çирĕплетнĕ кун тĕлне тултарма, растратăсене пĕтĕмпех пĕтерме сăмах пачĕç.

Пленум Чăвашсойуз правленин куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавне тумала тесе йышăнчĕ, тата отличниксене премисем пама 20 пин тенкĕ уйăрса хучĕ.

Пленум Чăвашсойуз правленине тата потребкооперацинче ĕçлекенсен профсойузĕн Обкомне Мордва облăçпотребсойузне социалисăмла ăмăртува чĕнме хушса хăварчĕ.

П. Лаврентйев.
Н. Петрова.

Кирпĕч завочĕ сезона хатĕрленет

Шупашкарти кирпĕч завочĕ çуллахи сезона хатĕрленессипе пысăк ĕçсем турĕ. Чĕрĕ кирпĕчсене турттармали вагонеткăсемпе локомобилсене йусаса хатĕрлесе çитернĕ. Халĕ кирпĕч тăвакан 3-мĕш №-лĕ пресса, тăм турттармали вагонеткăсене тата кирпĕч типĕтмели сарайсене йусас ĕç пырат.

Кăçалхи сезонра заводра 170 çын ĕçлемеле. Пайанхи куна 138 çынпа договорсем тунă. Рабочисем пурăнмали хватерсене те пĕтĕмпех йусаса çитернĕ.

Хатĕрленÿ ĕçĕнче уйрăмăнах комсомолец А. Покровский йулташпа Мочалов тата Петров тимĕрçĕсем пысăк хастарлăхпа ĕçленине палăртмала. Вĕсем кулленхи нормăна йалановах тултарса ĕçлеççĕ.

В. Йегоров.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Шаньси провинцинче Китай çарĕсем халĕ те анăçлăн наступлени туса пыраççĕ. Китайцăсем йапонцăсене темиçе хуларан хăваласа кăларса йанă. Хальхи вăхăтра Китай чăсĕсем Пинлу хули çине наступлени туса пыраççĕ.

Мартăн 15-мĕшĕнче Китайăн 8-мĕш çарĕн чăсĕсем Лиши районĕнче Йапонин виçĕ пин салтаклă колонине хыттăн лăсканă. Йапонцăсем 800 çын вилнĕ. Мартăн 18-мĕшĕнче çав районра тепĕр пысăк çапăçу пулнă. Ку çапăçура йапонцăсен пин çын ытла вилнĕ. Китайцăсем йенче те чылай салтак пĕтнĕ.

Шаньтун провинцинче йапонцăсем Вейхайвей йатлă хулана йышăнни çинчен пĕлтереççĕ. Çав провинци çурçĕр пайĕнче çапăçакан партизансем Циндао Цзинань чукунçул тăрăх пуйассене çӳретме чарнă.

Вăтам Китайра Тяньцзинь—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче Китай çарĕсем партизансен отрйачĕсемпе пĕрле мартăн 18-мĕшĕнче Бенпу йатлă хула çине наступлени тума пуçланă.

Китай çарĕсемпе партизансем Ханчжоу патенче йапонцăсене хирĕç активлăн вăрçнă пирки, йапонцăсем кунта пысăк подкреплениесем илсе килеççĕ. Хальçеç Йапонирен çитнĕ икĕ дивизине Шанхай—Нанкин чукунçул районне йанă. Вĕсене партизансем йышăннă хуласем çине—Исин, Лишуй тата Лийан çине наступлени тума хатĕрленĕ.

Йулашки кунсенче Китай партизанĕсем Шанхай çывăхĕнчи районсенче çĕнĕрен вăрçма тытăннă.

Мартăн 18-мĕшĕнче Йапони авиацийĕ Вăтаçĕртипе Кăнтăр Китайра чылай пунктсем çине тапăннă. Йапони самольочĕсем Льаньзйан йатлă хула çине хыттăн бомбăсем пăрахнă. Хулара пурăнакан çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай шутланаççĕ.

(ТАСС).

К Ĕ С К Е Н

★ Америкăри ăслăлăхпа искусствăн прогрессивлă деятелĕсем—çĕр çын—Йапонире арĕсленĕ 372 çынна ирĕке кăларма ыйтса алă пуснă. Вĕсене халăх фронтне хутшăнса ĕçленĕ тесе айăпласа арĕсленĕ пулнă. Çак требованийе мартăн 18-мĕшĕнче Йапонин Вашингтонри посолне тыттарнă.

★ Официаллă пĕлтерӳсем тăрăх, март уйăхĕн пуçламĕшĕнче Францире ĕççĕр тăрса йулнă 412.386 çынна регистрациленĕ. Англире йулашки пĕлтерӳсем тăрăх, ĕççĕр тăрса йулнă 1.810 пин çынна регистрациленĕ. Ку вăл, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 238 пин çын ытларах пулать. (ТАСС).

Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене сарма пуçларăмăр

ССРС Осоавиахимĕн Тĕп Совечĕ Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене кăлармала тунине пĕтĕм совет çĕршывĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ. Ку лотерейă хамăр тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетме пулăшать.

Чăваш республикĕнчи Осоавиахим Тĕп Советĕнче ĕçлекенсем мартăн 20-мĕшĕнче митинг туса иртерчĕç. 12-мĕш лотерейă билечĕсене митинграх 850 тенкĕлĕх илсе, укçине те парса татрĕç. Стрелковăй спорт клубĕн комиссарĕ Василйев Й. лотерейă билетне 60 тенкĕлĕх илчĕ.

Митингра нумай йулташсем тухса каларĕç, вĕсем пурте Осоавиахимăн 12-мĕш лотерейă билечĕсене кăлармала тунине саламлаççĕ.

Осоавиахим Тĕп Советĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Чăваш республикинчи мĕн пур Осоавиахим, парти, комсомол тата профсойуз организацисене 12-мĕш лотерейă билечĕ çинчен халăха массăлăн ăнлантарса парса, вăл билетсене кĕске вăхăтрах сарса пĕтерме чĕнчĕ.

Федотов.

Лотерей билечĕсене кăларнине ырлаççĕ

ЕЛĔК. Мартăн 20-мĕшĕнче комсомолецсемпе Осоавиахим членĕсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене кăларни çинчен сӳтсе йаврĕç. Агитаципе пропагандă ĕçне анлăн сарса, лотерей билечĕсене кĕске вăхăтра вырнаçтарма пулчĕç.

„Çăлтăр" колхоз бригадирĕ комсомолец Федоров йулташ митингра сăпла тухса каларĕ:—"Осоавиахимăн 12 мĕш лотерей билечĕсене кăларнине ырлатпăр. Ăна туйанса хамăр çыршывăн оборонине тĕреклетеппĕр".

Йефремов.

Оборонă ĕçне вăйлатрĕç

Уравăшри (Вăрнар р.) колхоз çамрăкĕсем кăçалхи çул оборонă ĕçне чылай вăйлатрĕç. Осоавиахим организацинче халĕ 70 çын тăрать. Организаци вĕренӳ хатĕрĕсем туйанса пырать. Вĕренӳре çамрăксене Хĕрлĕ Çарта командир пулнисем йертсе пыраççĕ.

Осоавиахим организацийĕ общественлă ĕçсене те туса пырать. Вăл спектакльсем лартса, вечĕрсем иртерсе, колхозниксемпе колхозницăсене пушă вăхăта культуралă иртерме пулăшать.

В. Цыпленков.

Ӳкерчĕк çинчĕ: С. Бурашников йулташ. Вăл Чăваш республикĕнчи йĕлтĕрпе йарăнакансен ăмăртувĕнче мала тухнă. Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Шемшерте вăтам шкул уçмала

Кашни колхозник хăйĕн ачисене тивĕçлипе вĕрентсе, вĕсенчен врач йе учител, агроном йе инженер тăвасшăн. Ачасем хăйсем те, хамăрăн тăван çĕршывăн мухтавлă патриочĕсем, аслă Сталин саманине тивĕçлĕ строителсем пулас ĕмĕтпе хавхаланса ӳсеççĕ. Сталинла Конституци кашнинех вĕренӳ прави парса çирĕплетни колхозниксене питех те савăнтарать, питех те хавхалантарать.

Халĕ ачасем йалти туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнипех çырлахмаççĕ. Пурте пекех пĕр-пĕр аслă шкултан вĕренсе тухса, хăйне кăмăла кайакан специальнăç илмесĕр вĕренме чарăнасшăн мар. Анчах йалти шкултан, калăпăр, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнипе турех аслă шкула çитме çук. Çак йенĕре Шемшер таврашĕнче (Шупашкар р.) кансĕртерех вара.

Шемшерте тахçанах вăтам шкул йе 8 çул вĕренмели шкул уçасшăн тăрăшаççĕ. 1928 çулта Шемшерти 6 çул вĕренмели шкулти ачасен ашшĕ-амăшсен пухувĕ Шемшерте 8 çул вĕренмели шкул уçас ыйтăва тапратнă. Çав çулах ку ыйтăва Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Алмандайево йалсоветĕнчи халăх пухувĕсем, комсомол йачейкин пухувĕсем те çивĕччĕнех лартнă. Мĕншĕн тесен, Шемшерте çавнашкал шкул уçма условисем пулнă. Анчах Шупашкар райĕçтăвкомĕ кашнинчех чарса пынă, „Шемшер Шупашкар районĕн чиккинче ларать, çавăнпа пире сахал усă, парать" тенĕ райĕçтăвком.

Чăнах та Шемшер йалĕ Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри тата Çĕрпӳ районĕсен чиккисенче ларать.

Шупашкар райĕçтăвкомĕ „район чиккинче" тет, Сĕнтĕрваррипе Çĕрпӳ райĕçтăвкомĕсем „пирĕн район мар" теççĕ. Çавăн пиркийех халĕ Шемшер таврашĕнчи йалсенчи туллимар вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă ачасем нумайĕшĕсем вăтам шкула çитейесĕрех вĕренме пăрахнисем те пур.

Районсенче вăтам шкулсем пур, анчах çывăхра мар. Шупашкар районĕнчи Кӳкеç вăтам шкулĕ 16—17 километрта ларать, Тулик Хураскинчи—12 километрта, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси вăтам шкулĕ 20 километрта, Çĕрпӳ районĕнче Çĕрпӳ хулине çитмесĕр те çук.

Çавăнпа çак иртнĕ кунсенче Шемшер йалсоветĕн президиумĕ активпа пĕрле Шемшерте вăтам шкул уçас ыйтува çĕнĕрен хускатрĕ. Пуçарни питех те вырăнлă, мĕншĕн тесен Шемшерте вăтам шкул тума пур майсем те çителĕклĕ. Çуртсем çитеççĕ. Халĕ икĕ пысăк çурт пушах ларать, çитменнине хальхи туллимар вăтам шкулта та пушă классем пур. Вĕсемсĕр пуçне, Шемшерте преподавателсем вальли хваттерсем те çамăллах тупма пулать. Больницă, почтă, вуламали çурт, т. ыт.—çаксем пурте Шемшерти вăтам шкул вальли тивĕçлĕ условисем туса пама пултараççĕ.

Тепĕр йенчен, Шемшерте вăтам шкул туни Сĕнтĕрваррипе Çĕрпӳ районĕсенчи йалсене те аван пулать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Йуртакасси, Шуршăл, Алмандайево, Макаç йалсовечĕсенчи, Çĕрпӳ районĕнчи—Лепсер, Вăрăмçут йалсовечĕсенчи, Шупашкар районĕнчи—Шорчкасси, Хыркасси, Паçпак, Шемшер, Чăкăр йалсовечĕсенчи йалсенче (пĕтĕмпе 45 йала йахăн) Шемшере çӳреме 6—7 километртан ытла пулмасть. Апла пулсан, Шемшерте вăтам шкул уçма кирли паллах.

Анчах Шупашкар районĕнчи çутĕç пайĕн пуçлăхĕ Шемшерсен ыйтуне нимĕн вырăнне те хурасшăн мар, „Апашра уçма шутлатпăр" тет. Апаш йалĕ Кӳкеçпе йунашар пекех ларнине мĕншĕн асра тытасшăн мар-ши çутĕç пайĕн пуçлăхĕ Василйев йулташ?

К. Наманган.

Редакцине килнĕ çыру

Редактор йулташ, „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн 1937 çулхи нойабĕрĕн 26-мĕшĕнчи номĕрĕнче ман çинчен: Никишев, Вăрнар райĕçтăвкомĕн бухгалтерĕ, Вăрнар техникумĕнче пулнă халăх тăшманĕсене ирсĕр ĕçсем тума пулăшнă, тенĕ. Çапла çырни тĕппипех тĕрĕс мар. Епĕ, пĕр йенчен, райĕçтăвком бухгалтерĕ те пулман.

Райфинпай пуçлăхĕ Вахрамейев йулташ хушнипе епĕр виçĕ инспектор: Афанасйев Е., Никитин П. тата Никишев К. сентăбрĕн 13—17-мĕшĕнче техникумăн 1936, 1937-мĕш çулсенчи штатне туллипе туллимарри йенчен, штата тытса тăма çав хушăра укçа-тенкĕ мĕн таран тĕрĕс тăкаклănине, командировкăсене çӳресе тăкакланă укçа пĕрĕс-йе тĕрĕс мар тухнине, рабочисемпе служащисенчен ĕç укçи панă чух ведомăç тăрăх тытса йулнă тупăш тăрăх илекен налога, культсбор укçине, зайома тата „налог с оборота" тесе илнĕ укçана буджета тĕрĕс хывса пынипе пыманнипе пăхса тухрăмăр. Пăхнă чух нумай çитменлĕхсем палăртрăмăр. Вĕсем пирки „кушта" чарăнса тăмастăп.

Тата, акă мĕн каламала: епĕр ĕçукçипе командировкă тăкакĕсен документчĕсене çеç пăхса тухнă. Ытти статйасемпе пулакан тăкаксен документчĕсене тĕрĕслемен: пире ăна тума ирĕк паман. Техникумăн финанс хуçалăхĕнче пысăк çитменлĕхсемех пулнине кура, епĕр актăпа ун çинчен Çĕрĕç Халăх Комиссариатне пĕлтерме йышăнтăмăр. Унтан вара ревизи пирĕн хыççăнах çитрĕ, уйăх çурă хушши ревизилерĕ.

Малала, виçĕ сăмах пуп пулни çинчен: Епĕ револьуциччен 4 çул çурă пупра пулнă. Револьуци пулсанах пупран тухнă. 1918 çултанпах совет аппаратĕнче ĕçлетĕп. Чухăн хресчен семйинче çуралса, тăлăхăн кулак пусмăрĕ айĕнче ӳсрĕ. Вĕренессе епĕ салтакран йулсан тин вĕреннĕ. Пуп пулнине никамран та пытарман, пупран вăхăтра тухса, хам йăнăшăма тӳрлетнĕ.

К. Никишев.

Халăх пултарулăх çуртĕнче

Республикăри халăх пултарулăх çурчĕ 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче Шупашкар хулинчи хор кружокĕсен руководителĕсене хатĕрлекен 10 уйăхлăх курс уçнă. Курсра пĕтĕмпе 12 çын, вĕсем ĕçрен та ăлмасăрах вĕренме çӳреççĕ.

1937 çулхи çентăбер уйăхĕнче изо-студи уçнă. Ку студире 2 çул вĕренмеле. Пайанхи кун унта 21 çын вĕренет. Изо-студине Спиридонов художник йертсе пырать.

Мартăн 25-мĕшĕнчен пуçласа колхозсенчи хор тата драмă кружоксен руководителĕсене хатĕрлекен курс уçăлать. Курса 60 çын илеççĕ. Курсантсем вальли общежити хатĕрлесе хунă.

С.

МОПР йачейки организацилерĕç

Мартăн 19-мĕшĕнче инвалидсен Шупашкарти „Хĕрлĕ мăлатук" производствăлă ертелĕнчи рабочисен пухувĕ пулчĕ. Пухура Париж коммунĕ пулни 67 çул тултарни тата хальхи вăхăтри Австрири, Китайри, Германири, Испанири, Йапонири ĕçсем çинчен доклад туса пачĕç. Доклад хыççăн чылай рабочисем МОПР ĕçне вăйлатасси çинчен тухса каларĕç. Çав пухурах ертел çумĕнче МОПР йачейки организацилерĕç, члена 37 çын кĕчĕç.

В. Василйев

Електростанци ĕçлеме пуçларĕ

Хĕрлĕ Чутай. „Красный Четай" колхоз 1936 çулта чиркĕве пăсса електричествă станцийĕ лартнăччĕ. Анчах та малтанхи вăхăтра динамă машинă йапăх пулнă пирки станци нумай ĕçлеймерĕ.

Кăçалхи çул колхоз çĕнĕ динамă машинă туйанчĕ. Халĕ електростанци аван ĕçлет.

Г. Йеремейев.

Колхоза кĕреççĕ

ВĂРНАР. Йалсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕреннĕ май тӳрĕ ĕçлекен йединоличниксем колхоза кĕме пуçлареç:

Çак кунсенче Кĕçĕн Кипекри „Память Ленина" колхоза 8 хуçалăх, Йамбахтинри колхоза 6 хуçалăх, „Çенйал" колхоза 2 хуçалăх, „Правда" колхоза 8 хуçалăх тата „Авруй" колхоза 3 хуçалăх кĕчĕç.

Пулни-иртнисем

★ Йамбулатовă йалĕнчи (Тăвай р.) О. Захарова, колхоз счетовочĕпе Г. Харитоновпа пурăнса ача çуратнă. Алиментран хăтăлас тесе Харитонов Захаровăна ачана вĕлерме хушнă. Захаровă вĕлернĕ. Вĕлернĕ ачана Харитонов тислĕк купи айне алтса пытарнă. Çак кунсенче çак тискер ĕçе тупса палăртнă. Айăплисене суда панă.

★ Улатăр районĕнчи халăх сучĕн решенийĕ тăрăх, А. Матузко гражданинăн хăйĕн уйăрăлнă арăмĕпе пурăнакан ачи вальли алимент тӳлемеле пулнă. Анчах Матузко çак обйазаннăçрен йурийех пăрăнса, нумай вăхăт хушши пытанса пурăннă. Халĕ уголовнăй розыск ăна тупнă: вăл Ленинград облăçĕнчи Новогород хулинче пурăннă. Саккуна хирĕç çакăн пек киревсĕр ĕç тунăшăн, Матузко пирки уголовнăй ĕç пуçарнă.

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Невил Чемберленăн тулти политики

Халĕ Антлипе Итали хушшинче калаçу пырать. Çак калаçу çине Англи халăхĕ питĕ кăмăлсăр пăхать, ку калаçу Англи ĕççыннисене тарăхтарать. Мĕншĕн тесен, Англи правителствин пуçлăхĕ (министерсен совечĕн председателĕ) Невил Чемберлен тулти политикă тĕлĕшĕпе тытса пыракан çĕнĕ курс фашисла агрессорсемпе килĕшес йенĕпе пулса пырать. Çакăн çинчен Англири „либераллă „Манчестер Гардиан" хаçат та çырса пĕлтерет.

Италипе тусланасшăн, унпа малтанлăха услови кăларса тăратмасăрах калаçу пуçласшăн тăракансем: Великобританин Вăтаçĕр тинĕсĕнчи лару-тăрувĕ лăпках мар, унта Итали çар флочĕпе авиацийе Британин колонисемпе çыхăнса тăмали çулйерне хăрушăлăх туса хураççĕ, тесе ăнлантараççĕ. Вăтаçĕр тинĕс çинчи Британин тинĕс çулйерĕ чăрмавлă пулни çĕнĕ ыйту мар, ун çинчен тĕнчери хаçат-журналсем вуна çул хушши ĕнтĕ пĕрмайах çыраççĕ. Паллах ĕнтĕ, Англи хăйен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи лару-тăруве пирки шикленет, мĕншен тесен унта унăн Порт-Саидри, Гибралтарти, Мальтăри тинĕс-çар флочĕн базисене Италин çар карапĕсем те, авиаци те хăратма пултарать. Анчах çакă Британин тулти политикине фашисла агрессорсем йенне çавăрас инче татăклă вырăнта тăни пирки—питĕ иккĕленмеле.

Пĕрремĕшĕнчен, Великобританин Италипе хĕçпăшаллă вăйпа тĕл пулмала пулсан, вăл хăйен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи сывлăш тата тинĕс-çар флочĕсен вăйĕсем çине çеç мар, Франци пулăшувĕ çине те шанма пултарна. Мальтă Сицилипе çывăх пулнă пирки Мальтăшăн хăрушă пулсан, вара Сицилийĕн те тата Италин пĕтĕм çыранĕсемшĕн те çавăн пекех хăрушлăх пулса тăрать. Чăнах та, Мальтă Великобританин тинĕс-çар флочĕн тĕп базисенчен айакра, анчах Франци Вăтаçĕр тинĕсре Италирен вăйсăр мар.

Нумайах та пулмасть, „Дейли телеграф енд Морнинг Пост" хаçатра Англин çар ĕçĕн паллă специалисĕсенчен пĕри, çак хаçатăн çар корреспонденчĕ генерал-майор Темперли Италин стратегилĕ лару-тăруне пăхса тухнă. Генерал майор Темперли çакăн пек вывод тăвать: Итали Йегипета туртса илессипе хăратни ĕçе кĕме пултарас çук. Ливире вырнаçнă Итали çарĕсем Йегипета кĕрсе кайас пулсан, вĕсен шывсăр çулпа 300 километр каймала, унта сывлăшра тапăнассинчĕн çăлăнмали нимĕнле май та çук.

Италипе Абиççинийе çыхăнса тăрассине татма Англишĕн нумай çăмăл, çакна тума вăрçă чухне Суецк каналне хупмала çеç. Çавăн пекех, Вăтаçĕр тинĕсре пуç пулса тăрассине хайĕнчех хăварса, Итали Ливи патне пырас çула Англи хупма пултарать.

Италин стратегилĕ лару-тăрувĕ пит те йывăр, тесе çырать малала Темперли. Çар вальли апат-çимĕ тата чĕрĕ тавар тăратасси йăлтах тинĕсри суту-илӳрен килет.

Италийе кайакан таварсен тĕп хисепĕ Гибралтар проливĕ тата Суецк каналĕ урлă кайать. Çак икĕ пунктне те Англи контроль туса тăрать. Италин генеральнăй штабĕ çакна пит те лайăх пĕлет.

Ллойд-Джордж хăйĕн çар мемуарĕсенче вăрçă вăхăтĕнче Итали мĕнле шутсăр йывăр условире пулни çинчен тĕплĕн каласа парать. Англи хăйĕн карапĕсем çинче чĕрĕ тавар тата апат-çимĕç турттарма пулăшман пулсан, Итали выçăпа аптранă пулĕччĕ, пĕр çул та пурăнма пултарайман пулĕччĕ.

Çак фактсем пуриншĕн те паллă, вĕсем çинче тĕплĕн чарăнса тăмасан та йурать.

Британи правителствин тулти политики тĕпренех улшăннине мĕнпе ăнлантарма пулать?

„Иден Муссолинишĕн пĕтрĕ" йатлă статйара Англири лейбористсен оргăнĕ „Дейли Геральд" хаçат çак ыйту çине ответ парать. Чемберлена финанс, капитал хуçисем хĕтĕлеççĕ, вĕсем Англине фашисла çĕршывсемпе туслă пурăнтарасшăн.

Вĕсем, финанс хуçисем, Итали Абиççинине туртса илнине йышăнтарасшăн. Çаксем вĕсем—финанс магначĕсем Франко генерала сийеле кăларасшăн, Испанин демократилĕ правителствине çĕнтерессишĕн тăраççĕ. Вĕсем тĕнчере демократи вăйланассинчен хăраççĕ, хăйсен финанс интересĕсемпе килĕшӳлĕ политикă тума хушаççĕ.

Чемберлен тытса пыракан политикă мирлĕх майлă мар, вăрçă майлă тесе çырать „Дейли Геральд" хаçат. Чемберлен пĕтĕм тĕнчене агрессорсем умĕнче Англи вăйсăррине кăтартать.

Испанири интервенци ыйтăвĕ тĕлĕшĕпе, Иден отставкăна тухас умĕнхи чи йулашки вăхăтра тата Австрире пулса иртекен ĕçсем тĕлĕшпе Великобритани тытнă позици Британи политики фашисла агрессорсене пулăшас çулпа пынине кăтартса пачĕ. Англи правителстви Италипе калаçу пуçланипе пĕрлех Гитлерпа калаçу пуçласшăн. „Тăватă государствă килĕшӳвĕн" (Англи, Франци, Германи, Итали) пройектне çĕнĕрен турта кăлараççĕ. Невил Чемберлен Лигă наци çине тапăнса пыни—коллективлă хăрушсăрлăха пăрахăç тунине кăтартса парать.

Невил Чемберлен тытса пыракан çĕнĕ политикă пĕр ĕç патне—фашисла агрессорсен аллине салтса йарасси, вăрçă хăрушлăхне çывхартасси патне çеç илсе пырать.

Великобританин урă пуçлăрах политикăлă деятĕлĕсем фашисла агрессорсене ирĕк паракан, вĕсем умĕнче кайала чакакан политикă хăрушă тата сийенлĕ пулнине ăнланаççĕ. Консервативлă партире те Чемберлен политикипе килĕшменнисем пур.

Фоуллер тата Райт çырнă „1938 çулти вăрçă" йатлă паллă кĕнекере çакăн пек вырăн пур: „Фашисла Германи Англине ультиматум парать, гаранти шучĕпе Англирен Гибралтара пама ыйтать. Муссолини пайăнах Суецк каналне тытса тăрас ĕçе хăйне хутшăнтарма ыйтать. Англи ирĕк панипе тата вăл пулăшнипе çунатлантарнă Гитлерпа Муссолини ыран мĕн ыйтасси çинчен калама йывăр. Агрессор умĕнче пĕрмайах чакса пырас, фашисла провокацисене пулăшас çул çак агроссорсем умĕнче чакса тата вĕсене пулăшас политикăна тытса пынă çĕршывшăн хăйĕншĕнех хăрушă пулĕ".

Нимĕн иккеленмели те çук. Англин тулти политикин çĕнĕ курсĕ империалисăмла хирĕçӳсене çивĕчленесси тата вăрçă хăрушлăхĕ çывхарасси патне илсе пырать.

Г. Семенов.

Пур предприйатисене, учреждениесене, ертелсене, колхозсене пĕлсе тăма

ШУПАШКАРТИ

1-мĕш № типографи

пичетсем, штампсем, тĕрлĕрен бланксем тума

почтă урлă нимĕнле заказ та йышăнмасть.

Заказ панă чух малтан, заказ памалине тивĕçлĕ организацине кăтартса çирĕплеттермеле, вара заказ паракан организацин предприйатин, колхозăн, учрежденин хăйĕн çынне йамала.

Дирекци.

2—1

Академи театрĕнче

Мартăн 22-мĕшĕнче

Вырăсла спекталь

ПРЕМЙЕРА

Н. В. ГОГОЛЬ

РЕВИЗОР

(5 пайлă комеди)

Аслă режиççор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.

Художник Й. Н. САПОЖНИКОВ.

Талон № 144.

Абонемент № 6, талон № 14.

Чăвашсен Педагогикă Институчĕ харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен студентсене пĕлтерни

Килте, харпăрхăй тĕллĕн вĕренмели кĕнекесене (литературă) малала укçасăр йамаççĕ. Вĕренмели кĕнеке ене Институт урлă илес текенсем, малтан çак адреспе 50 тенкĕ укçа куçармала: Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 82, Чăвашпединститут бухгалтерине.

Укçа куçараканăн хăйĕн адресне тĕплĕн кăтартмала, хушамат, йат, ашшĕ йачĕ—пĕтемпех кирлĕ тата шифр.

Дирекци.

2—1

1938 çулта çуллахи сезонра Чебторгăн квас сутакан ларйокĕсенче ĕçлеме

Продавецсем кирлĕ

Чебторга кадрсен пуçлăхĕ патне пымала.

2—1

Госбанк *урлă ĕçукçи илекен пур организацисен те иккĕмĕш квартăлта илмели ĕçукçи фончĕ пирки 30-мĕш формă тăрăх зайавкă тăратмала.*

Йулашки срук— мартăн 25-мĕшĕ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци Трестне

Ростоври кинотехниксен курсне

вĕренме кайма 3 вырăн панă.

Курсра пĕр çул çурă вĕренмеле.

Курса 18 çулхисенчен пуçласа 40 çулхисем таран, вăтам (10 çуллă) шкултан вĕренсе тухнисене йе вĕсемпе тан пĕлӳ илнисене йышăнаççĕ.

Курсантсене стипенди параççĕ тата общежити пур.

Зайавленисене мартăн 25-мĕшчен „Чăвашкино" трестне памала.

Ыйтусене „Чăвашкино" трестĕнче татса параççĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 143. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.